4407
19–92

АЛЕКСАНДР КĂЛГАН

# КӲРШĔСЕМ

*КОМЕДИ*

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
1949



АЛЕКСАНДР КАЛГАН

# КӐРШӖСЕМ

*Тӑватӑ пайлӑ комеди*

2 августа 1949 г.
№ 137

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1949

## Пьесăри çынсем:

Мирон Михалч—колхоз утарĕнче ĕçлекен.
Мавра—унăн арăмĕ.
Никандр—вĕсен ывăлĕ.
Василий Захарч—пахалăх инспекторĕ.
Улюна—унăн арăмĕ.
Праски—вĕсен хĕрĕ.
Василий Иванч—колхоз председателĕ.
Мышкин—колхоз счетовочĕ.
Тамара—малтан колхоз кассирĕ, унтан—студентка.
Колхозниксем, çамрăксем.

# ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Колхоз правленийĕ. Уçă чӳречерен урамра лаштра йăмрасем курăнаççĕ. Стенасем çинче портретсемпе плакатсем. Сулахайра председатель кабинетне кĕмелли алăк. Пĕр-пĕринчен инçех мар тăракан сĕтелсем хушшинче Мышкинпа Тамара лараççĕ.

Мышкин (*анасласа*). О-о-ох... Кăнтăрла та çитрĕ пуль паян? (*Тамара енне пăха-пăха илет, леш чĕнмесĕр вуласа ларать*). Апата час каятăн-и эсĕ? (*Тамара çаплах чĕнмест*). Хăлхине те чикмест. Кĕнеке çине тăрăннă та — пурне те маннă. (*Ӳсĕркелет, пӳрнисемпе сĕтеле шăкăртаттарса илет. Тамара кăшт хускалать*). Темĕнле тумалла ку ĕç планне? (*Пауза*). Бригадирсене чĕнсе килмеллеччĕ те... (*Тамара çаплах шăпăрт ларать. Мышкин тăрса шкап патне пырать, темскер шырать.*) Тамара!..

Тамара (*шартах сиксе*). Мĕн кăшкăратăн?

Мышкин. Кĕнеке ăшне путнă та ху, илтми пулнă. Пĕлместĕн-и, пĕлтĕрхи ĕç планĕсем ăçтарах выртаççĕ-ши?

Тамара. Аялти çӳлĕкре чĕ пулас.

Мышкин (*шыраса*). Çук-çке кунта? Тупса пар-ха, тархасшăн.

Тамара (*ун патне пырса*). Çавăнтахчĕ-çке. (*Мышкинпа çуммăн пĕшкĕнсе шырать*). Акă-иç!

Мышкин (*папкăна ун аллинчен илсе*). Тавтапуç! (*Тамарăна хăвăрт питĕнчен чуптуса илет*).

Тамара (*çиленсе*). Мĕн хăтланатăн эсĕ?

Мышкин. Каçар, Тамара, ăнсăртран пулчĕ.

Тамара. Халиччен мана çил те сĕртĕнмен.

Мышкин. Çавăнпа саватăп та эп сана.

Тамара. Праскине хытăрах сав!

Мышкин. Праски маншăн—пĕлĕтри тăрна.

Тамара. А эпĕ мĕн, алăри çерçи-им? Халех каялла чуптуса ил!

Мышкин (*Тамара патне ыткăнса*). Хаваслансах!..

Тамара. Ме! (*Мышкина питĕнчен çупса ярать. Çав вăхăтра* Василий Захарч *кĕрет*).

Василий Захарч. Ай-яй-яй! Вут тухсах кайрĕ! Мĕне пĕлтерет ку?

Тамара. Караç шăл сурать тет,—эпĕ сывататăп. (*Хăй вырăнне ларать*).

Василий Захарч. Турă сыхлатăрах ун пек усал чиртен!

Мышкин (*шўт туса*). Кĕвĕçет вăл, Ваçак пичче. Эп урăххине мухтама пуçларăм та... (*Вырăнне кайса ларать*).

Тамара. Пит кирлĕ эс мана!

Василий Захарч. Ахаль шавлатăр. Туй

тăвас пулать сирĕн, мăшăрланас пулать. Ларăр та ларăр вара, хире-хирĕç пăхса, сулхăнра.

Мышкин. Ай, ытла та юратмасть-çке çак сулхăнра ларакансене!

Тамара. Пирĕн ĕçĕ çавăн пек пулсан, эпир айăплă-им кунта ларнăшăн? Вăл хăй, ав, пахалăх инспекторĕ те—сухалне каçăртса çеç çÿрет. (*Ĕçленĕ пекки тăвать*).

Мышкин. Чипер калаç-ха эсĕ.

Василий Захарч. Калаçтăр. Эп кÿренместĕп. Çÿрессине—çÿретĕпех çав ĕнтĕ. Паян та уй-хир пăхса çÿрерĕм-ха...

Мышкин. Эп такки тухса курайманăм кăçал. Мĕнле унта, тырпулсем мĕнле ÿсеççĕ?

Василий Захарч. Чаплă ÿсеççĕ. Ыраш пĕтĕм пуссипех тинĕс пек хумханса ларать. Пирĕн Праски бригадин уйрăмах вăйлă, çĕлен шуса тухайрас çук.

Мышкин. Ахаль-им вăл кашни гектартан çĕр аллă пăт туса илме сăмах панă? Çавăнпа тăрăшать.

Тамара. Вăл пĕччен кăна мар, пурте тăрăшаççĕ. МТС та пулăшать. (*Караçа.*) Эсĕ ху та, авă, ун валли ĕç планĕ туса паратăн.

Мышкин. Праски çинчен калаçма та кирлĕ мар. Паллах, герой пулмасан та, орден илетех вăл кăçал. (*Василий Захарча.*) Çуртыррисем мĕнле ÿсеççĕ унăн, Василий Захарч?

Василий Захарч. Çуртыррисем те япăх мар. Анчах виççĕмĕш бригадăн вирне тепĕр хут çумлас пулать. Хайсемех курмалла та

çавна... Хушмасăр, каламасăр—нимпе те ĕçлеме вĕренеймеççĕ.

Тамара (*тăрăхласа*). Сан хăвăн арăму пит нумай ĕçлет пулас, Василий Захарч? Пăх-ха, миçе сотăй ĕçкунĕ тунă вăл кăçал?

Улюна кĕрет.

Василий Захарч (*шӳт туса*). Ак вăл, çылăхлăскер, сăмах çинех килсе кĕчĕ.

Улюна. Мĕн сăмахласа ларатăн кунта ман çинчен? Апат тĕлне пĕлместĕн! Праскийĕ пур тата, сан пеккиех, таçта çĕтсе çӳрет. Пахчари йăрансене çемçетесчĕ хăть.

Василий Захарч. Кок-сагыз участкине çемçетеççĕ вĕсем. Пахчара эс хăвах аппалан ĕнтĕ.

Улюна. Кăк-сагăс! Тупнă тĕлĕнтермĕш япала, тырă акса тăвас çĕре сая яма!

Василий Захарч. Сая яни пулать-и! Пĕлтĕр çитмĕл центнер кок-сагыз тымарĕ ӳстерсе пачĕç те, кăçал ав государство пире автомашина туянтарать. Василь Иванч çавна илме кайнă вĕт.

Улюна. Курăкран ахтомашин тăваççĕ-им вара?

Василий Захарч. Резина тăваççĕ. Çутă калуш тăхăнма юрататăн-çке?

Улюна. Кай, ан сӳпĕлтет... Чим-ха, чим, ĕçнĕ мар-и çак эсĕ?

Василий Захарч. Эрех мар, карчăк, сăра. Пыл сăри...

Улюна. Ăçта çапла, вăхăтне пĕлмесĕр, ĕççе çӳретĕн?

Василий Захарч. Хир пăхса çӳрерĕм те çула май утара та çитрĕм. Мирон Михалч шăпах пыллă сăра йӳçĕтсе хунă. Пĕлетĕн, вĕсем ывăлне кĕтеççĕ.

Улюна (*кулянса*). Вĕсем телейлĕ, вĕсен таврăнать ав. Пирĕн, мăнтарăн ачи, вăрçăрах пуçне хучĕ. (*Тутăр вĕçĕпе куçне шăлать*).

Мышкин. Мĕн тăвас тетĕн, Улюна инке? Вăрçă çухатусăр пулмасть. Тăлăхах тăрса юлман-çке-ха эсир, чуна йăпатма Праски пур сирĕн.

Улюна. Паян пур вăл, ыран çук. Хĕрача вăл, вĕçен кайăк чĕппи пек, ӳссе çитет те вĕççе каять тăван йăваран.

Мышкин. Эппин, эсир ăна аякка ан вĕçтерĕр, тăван килтех йăва çавăрса парăр. Ун патне чи лайăх каччă киле кĕме пултарать.

Улюна. Килсĕр каччăсем питех çук çав халь.

Мышкин. Шырасан—тупăнать. Сирĕнни пек кил-çурта такам та савăнсах пырать.

Тамара. Сăмахран,—хăть эсĕ те.

Мышкин (*савăнăçлăн*). Каларăн! Мана Василь Захарч юратмасть.

Василий Захарч. Мĕншĕн юратас-ха сана? Ман ĕçкунĕсене çухатса ларнăшăн-и?

Улюна (*вĕчĕрхенсе*). Мĕнле ĕçкунĕсем çухатнă вăл пирĕнне?

Василий Захарч. Мунчала хутса тунăшăн çырса панă ĕçкунĕсене.

Мышкин. Тупăп-ске, çырса панă япала таçтах каяс çук. Вăхăт пулмарĕ-ха кутăруçăн. Акă, ĕç планĕсемпе супса ларатăп.

Василий Захарч. Эс супса ларнинчен усси пит нумаях курăнмасть çав.

Улюна (*Мышкина тапăнса*). Паянах тупса çырнă пултăр вăл ĕçкунĕсене! Пире упишать тума лартман сана кунта.

Мышкин (*тарăхса*). Юрĕ-ске ĕнтĕ. Пуçларĕç иккĕн харăс атакăлама. Ĕçлеме те ирĕк памаççĕ.

Василий Захарч. Каяр, карчăк. Ĕçлеччĕр çавсем Ахаль килсе чăрмантартăмăр. Çитменнине, Карaçăн шăлĕ те сурать, тет ав.

Улюна. Шăлĕ мар ун, кутăнĕ сурать. Лайăхрах тыткалакан çук ăна. Василь Иванча каласа парас пулать, вăл пит ачашласа тăмĕ.

Василий Захарч. Кивĕ счетовод таврăнать-ха авă. Ытах ĕçлесси килмест пулсан, Караç тесе пăхсах тăмăпăр ун чух. (*Тухса каяççĕ*).

Тамара. Йăпăлтатрăн, йăпăлтатрăн вĕçен умĕнче, хăвнах ятласа тухса кайрĕç.

Мышкин. Чуна илме хатĕр çав ĕçкунĕсемшĕн. Эп айăплă-им, бригадир çырса паман пулсан?

Тамара. Çырса панă, терĕн-ске?

Мышкин. Табак туртса яман ĕнтĕ эп ăна.

Тамара. Асту, Василь Иванч пĕлсен, пĕçертет акă.

Мышкин. Мĕн пурте Василь Иванчпа

хăрататăр мана! Кам пулнă вара вăл фронтра? Лейтенант? Тупнă аслă çын! Эп полковниксемпе куçа-куçăн тăрса калаçнă. „Тигра“ хирĕç пĕччен тухнă эпĕ, çапах хăраман. Фронтра эп хам вырăна лайăх пĕлнĕ. Пĕлĕттĕн эсĕ—ман отделенире дисциплина мĕнле çирĕп пулнине. А кунта мĕнле акă? Кунта, ав, сана ват карчăксем те ятласа çӳреççĕ. Нимле хисеп те çук. Çилле кӳрсен—тăратăп та хулана пăрахса каятăп акă.

Тамара (*тăрăхласа*). Тархасшăн пăрахса ан кай, Герасим Лукич. Эс кайсан, колхоз мĕнле пурăнĕ? (*Урăх тонпа.*) Эх, герой! Вăтан пăртак, мĕн калаçатăн? Арçын вĕт эсĕ, каччă! Фронтра паттăр пулнă. Çапла сӳрĕкленме юрать-и? Ме каялла, кирлĕ мар мана эс чуптуни!.. (*Хăвăрт кăна питĕнчен чуптуса илет те чупса тухса каять*).

Мышкин (*ун хыççăн ыткăнса*). Тамара!.. Мĕне пĕлтерчĕ ку? Хăй чуптурĕ! Ниушлĕ юрататъ вăл мана? Мур илесшĕ! Сасартăк темĕнле ырă туйăнса кайрĕ. Чăн та, мĕн-ха Праски çинчен шухăшлатăп эпĕ? Пурпĕрех нимĕн те тухас çук унпа. Çитет! Кăларса ывăтатăп ăна хам пуçран. Ашшĕ те кураймасть мана,—амăшĕ те мĕнле хаяр! Тамара луччĕ лайăх. Куçĕсем мĕнле кăн-кăвак унăн! Çӳçĕ—сарă ука пек! Çитменнине юрататъ тата мана! Юрататъ, юрататъ, ыталаса чуптăвать (*ташласа илет*).

Праски кĕрет. Аллинче чечек çыххи.

Праски. Хытăрах тап, Герасим Лукич!

Мышкин (*чеелейме хăтланса*). А-а, Праски!.. Эс мĕн, тем ан шутла... Пĕр вырăнта ларнипе ура çывăрса кайрĕ те, кăшт тапса илтĕм. (*Хăй вырăнне кĕрсе ларать*).

Праски (*кулса*). Иртсе кайрĕ пуль?

Мышкин. Халь аптрамасть. (*Сăмаха пăрса*). Мĕнле хитре чечексем татнă эсĕ! Кама парнелесе савăнтарăн-ши?

Праски. Никама та.

Мышкин. Кама та пулин юрататăн пулĕ те-ха?.. Сан пек хитре хĕрĕн каччă çук марах ĕнтĕ.

Праски. Пирĕн каччăсем сăпкара выртаççĕ тет-ха. Тĕлсĕр калаçатăн эсĕ, Герасим Лукич. Ме-ха, акă, пăхса тух çак хутсене: ку—колхозниксен çак эрнере тунă ĕçкунĕсем; паянах списока хушса çырма ыйтатăп.

Мышкин. Вăхăт çук-çке-ха...

Праски. Тупатăн. Кусем, акă, утă çулмалли тата тырă вырмалли ĕç планĕсем. (*Хучĕсене Мышкин умне хурать*).

Мышкин. Мĕнле типтерлĕ эсĕ, Праски! Паян шăпах çак плансемпе асапланса ларатăп-ха. Кашни бригадир сан пек аккуратни пулсан—мана та ĕçлеме çăмăл пулĕччĕ.

Праски. Пăхса тух-ха хам умра, тен килĕшмен вырăнсем пулĕ? Колхозниксемпе пĕрле канашласа турăмăр та...

Мышкин. Сан ĕçне эпĕ куçа хупса та йышăнма пултаратăп.

Праски. Пĕрле пăхсан, татах та аванлатма пулать-и тен?

Мышкин. Кирлĕ мар. Эп сана ахалех шанатăп.

Праски. Шанасса шан та, анчах сĕтелте нумай ан вырттар. Ĕçе вăхăтра тунине юрататăп эпĕ.

Мышкин. Эп хам та çавах. Кала-ха эппин, сан бригадуна ыраш вырма миçе кун кирлĕ?

Праски. Пилĕк кун.

Мышкин. Ан тĕлĕнтер!

Праски. Нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Пăх-ха плана, унта пĕтĕмпех çырса кăтартнă.

Мышкин. Сахал вăл пилĕк кун. Çумăр çума пултарать, машина çĕмĕрĕлме... Ак, пĕлтĕрхи план. Пĕлтĕр сакăр кун вырнă эсир.

Праски. Пелтĕрхи председательпе çирĕм сакăр кун та вырма пултарнă. А кăçал, Василий Иванчпа,—пилĕк кун та çитет. Кăçал эпир МТС-па та договор тунă. Комбайн вăхăтра килсен, тăватă кунрах вырса пĕтеретпĕр.

Мышкин. Капла ĕçлесен—герой пулатăнах эсĕ. Вот телейлĕ пулать сана качча илекен!

Праски. Герой пуласси çинчен ытлашшиех шухăшлас мар-ха,—таçта пуç çавранса кайĕ тата.

Мышкин. Сан çаврăнса каяс çук. Сан бригаду пирки иккĕленместĕп эпĕ. Ырашсем мĕнле вăйлă ӳсеççĕ сан—çĕлен шуса тухайрас çук! Çуртырри те япăх мар. А вот виççĕмĕш бригада—начар ĕçлет. Семавина кала-ха, курсан: ма

вирне тепӗр хут çумлаттармасть вӑл? Кӑларса çапас пулать ӑна бригадиртан. Ун вырӑнне Никандра лартмалла.

Праски. Хӑш Никандра?

Мышкин. Сирӗн кӳршӗре.

Праски (*хумханса*). Таврӑнчӗ-им вӑл?

Мышкин. Таврӑнать, тет. Мӗн эс, мӑкӑнь çеçки пек хӗрелсе кайрӑн?

Праски. Ăçта?

Мышкин. Ав кама кӗтсе илме татнӑ иккен эс ку чечексене! Телейлӗ Никандр! Ав мӗншӗн сирӗн аçӑрсем пыл сӑри ӗçме пуçланӑ. Туя хатӗрленеççӗ иккен вӗсем!

Праски. Ан кул, тархасшӑн, Герасим Лукич. Ăçтан асна килчӗ ун пек шухӑш? Тамара йӑлтах урӑхла каласа пачӗ мана. (*Кулса*). Эп, мӗнччӗ-ха, эс хӑтана пырасса кӗтеттӗм. Е прахӑç турӑн-и?

Мышкин. Ха кулать, ха кулать! А камччӗ çав, эп сӑмах хускатма пуçласанах, сивӗ куçпа пӑхакан? Халь ӑнлантӑм. Халь йӑлтах паллӑ маншӑн...

Тулта машина сасси.

Праски. Мӗнле машина ку? (*Чӳречерен пӑхать*). Василь Иванч килмерӗ пулӗ-çке? Ой!.. килнӗ!.. (*Чупса тухса кайрӗ. Чечек çыххине сак çине манса хӑварчӗ*).

Мышкин (*Праски хыççӑн*). Кам килчӗ? Василь Иванч-и? Плана туса пӗтерейменрӗм, мур илесшӗ. Паянах килеймест пуль тенӗччӗ. (*Тӑр-*

*са чӳречерен пăхать.*) Ак хайхи! Вĕр-çĕнĕ грузовик илсе килнĕ. Çĕр çăттăрах!.. Никандр вĕт ку? Çавă! Калап, Праски çил пек тухса ыткăнчĕ! Ха, чечекне те манса хăварнă. Çапла-çке вăл—юрату! Ун патне пурте чĕрне вĕççĕн чупаççĕ. Анчах, мĕншĕн кĕвĕçместĕп-ха эпĕ? Вăл Никандра юратать, а эп—кĕвĕçместĕп. Апла пулсан, юратмастăп эп ăна. Так точно!.. Ак, тепĕри килсе çитрĕ... (*Кĕвĕçсе.*) Асту-ха эсĕ ăна, епле авкаланать вăл Никандр умĕнче! Мĕн кирлĕ ăна? Праски чиперех тăрать, а вăл—ыталаса илме хатĕр. Вот хĕр пулать!.. А-а, хăпрĕ!.. Кунта килет! Пĕр сурприц тăвам-ха! (*Шкафран банкă илет те унта чечек çыххине вырнаçтарать, вара Тамара сĕтелли çине лартать. Хăй часрах вырăнне ларса ĕçлеме пуçлать*).

Хавасланнă Тамара васкаса кĕрет.

Тамара. Герасим Лукич! Мĕн тунката пек ларатăн?.. (*Чӳречерен урамалла пăхать*).

Мышкин. Культурлăрах калаçсан та юрать пуль?

Тамара. Тăрса пăх-ха эсĕ: Василь Иванч мĕнешкел грузовик илсе килчĕ!

Мышкин. Ун йышши çеç мар курнă эпир.

Тамара. Пĕлетĕн-и, Василь Иванч кама лартса килнĕ?

Мышкин. Ăна эпĕ сан куçăнтан пăхсах пĕлетĕп. Анчах, кăлăхах хăпартланатăн. Унăн сансăр пуçнех пур...

Тамара (*сĕтелли патне пычĕ*). Ой, мĕнле хитре чечексем! Ăçтан килсе ларнă вĕсем кунта?

Мышкин. Çаран çинчен.

Тамара. Вăт маттур! Хăш вăхăтра ĕлкĕртĕн?

Мышкин. Эс тепре чуптусан, чечек мар, тӳпери çут çăлтăра татса пама та хатĕр эпĕ.

Тамара. Мухтанчăк... (*Чечек çыххине илчĕ те чӳрече патне ыткăнчĕ*).

Уçă чӳрече умне Никандрпа Василий Иванч килсе тухаççĕ.

Никандр. Пушансан, пыр вара, Василь Иванч.

Василий Иванч. Пыратăп, пыратăп, Никандр Миронч.

Тамара. Кĕмесĕрех иртсе каятăн-и, Никандр?

Никандр. Кайран, Тамара...

Тамара. Эппин, йышăн çакна ăша кăмăлтан. (*Чечек çыххине Никандра парать*).

Никандр. Тавтапуç, Тамара. (*Чӳрече умĕнчен çухалать*).

Мышкин. Илĕртсе кĕртеймерĕн-им? Кĕнеке çинчи пекех хăтланатăн. Вуласа тултарнă та...

Тамара. Мĕнле патварланса кайнă вăл! Мĕнле маттур!

Мышкин. Куртăм-çке,—çынран пĕрре те ытлашши мар,—старшина çех. Офицер пулса килнĕ пулсан, татахчĕ хăть. (*Тăрса чӳрече патне пычĕ. Тамара унтан пăрăнса кайрĕ*). Аха, чечек хуçи тупăнчĕ! (*Тамарăна.*) Пăх-ха,

пăх эсĕ, ма пăрăнса кайрăн? Куратăн-и, кама пачĕ вăл сан „парнӳне?“

Тултан ура сассисем илтĕнчĕç те, Мышкин васкасах хăй вырăнне кĕрсе ларчĕ. Василий Иванч кĕрет.

Василий Иванч. Сывă-и, пурте! Герасим Лукич хĕрсех ĕçлет, машинăна курма та тухмарĕ.

Мышкин. Куртăм эпĕ, Василь Иванч, чӳрече витĕр куртăм. Лайăх машина! Халь ĕç хута кайрĕ ĕнтĕ пирĕн, Василь Иванч. Кăçал ăмăртура Михеевсене кая тăратса хăваратпăрах. (*Сĕтел хушшинче темскер çырса ларакан Тамара çине пăха-пăха илет*).

Василий Иванч. Михеевсемпе танлашма инçе-ха пире.

Мышкин. Çавах та пирĕн те машина пур халь.

Василий Иванч. Пĕр машинăпах мала тухаймăн. Колхоз вăл сельпо мар. (*Пирус чĕртсе.*) Шофер çук-ха вăт...

Мышкин. А, Ваçук?

Василий Иванч. МТС ямасть ăна.

Мышкин. Епле ямасть, — хамăра кирлĕ пулсан?

Тамара. МТС та хамăрăн, пĕлме тивĕç çавна.

Мышкин (*Тамарăна*). Эс ан вĕрент. Пиччӳ МТС-ра ĕçленĕрен, МТС хутне кĕретĕн-им? (*Василий Иванча.*) Мĕн тăвас-ха, Василь Иванч?

Василий Иванч (*шӳт туса*). Сана председатель туса лартас, Тамарăна—счетовод, а

эпĕ—шофер пулăп. (*Тамара сĕтелĕ хĕррине ларса ҫырать*).

Мышкин. Куҫ умĕнчех ан кул-ха эс, Василь Иванч. Ман шутпа, шоферсен курсне ҫын ярас пулать. Хăть ак, Тамарăнах. Атту вăл тек кĕнекесемпе супса ларать.

Тамара. Вĕренме каяс тесен, эп институтa та кайса кĕме пултаратăп. Сана вăт, чăн та, шоферсен курсне ярас пулать. Кивĕ счетовод ҫартан таврăнчĕ ав, халь эсĕ кирлех пулмастăн.

Мышкин. Эп хам та, ун пекех, фронтра пулнă.

Василий Иванч. Мĕнле эс, Герасим Лукич, плана туса пĕтермен-и? Каҫпа правлени пухас тетĕп эпĕ.

Мышкин. Каҫчен пĕтеретĕп, Василь Иванч.

Василий Иванч. Васка, васка.

Мышкин. Есть, Василь Иванч!

Василий Иванч. Апла калатăн та, темскер манма пуҫларăн-ха эс фронтри йĕркесене. Тăрăшарах ĕҫлес пулать, шăллăм. Пĕлетĕн, мĕнле ăмăрту пырать пирĕн ҫĕршывра. Халлап ярса ларсан—намăс курса ларма пултаратпăр. Ҫулăмпа ĕҫлес пулать.

Тамара (*Мышкина*). „Так точно“, те, герой.

Василий Иванч. А эс мĕн ĕҫлен халь, Тамара?

Мышкин. Вăл нихăҫан та ахаль лармасть, библиотекăра кĕнекесем нумай ун валли.

Василий Иванч. Вулани—начар мар. Анчах ĕҫе манас пулмасть, ĕҫ вăхăтĕнче вулама кирлĕ мар.

Тамара. Эп манмастăп, Василь Иванч. Халь анчах государствăна сĕт-çупа çăмарта панăшăн кĕнĕ укçана касса кĕнеки çине çырса пĕтертĕм.

Василий Иванч. Çырса пĕтертĕн? Эппин, пăртак уçăлса çӳре кайса. (*Хут парать.*) Ме, çак распоряженине Праские кайса пар. Сухан тата хăяр татса хатĕрлеччĕр, ӳсрĕç пуль ĕнтĕ. Хулара эп ресторан директорĕпе договор туса килтĕм,—аван тӳлеççĕ. Электростанци лартма укçа кирлĕ. Октябрь уявĕ тĕлне Ильич лампочкисем çутса ярасчĕ. (*Чӳрече еннелле пуçне пăрса илет.*) Атту, ав, Михеевсен колхозĕ каçхине хула пек ялтăрать, а пирĕн—урамрах аташса каймалла. Намăс мар-и çынсенчен кая юлма! Тоттă çав. (*Тухса каять*).

Мышкин. Ну-и, Василь Иванч! Ялан тем çитмест ăна, ялан сахал! Илтрĕн-и: „çулăмпа ĕçлемелле“ тет. А хăй сан çулăмна шывсăрах сӳнтерчĕ: сана, института каясскере, ял тăрăх хутпа чуптарать!

Тамара. Эп мăнкăмăллă çын мар, сан пек—полковниксемпе куçа-куçăн тăрса калаçман.

Мышкин. Е, каях, кай. Вĕçтер Праски патне. Тен вăл сана, хут леçсе панăшăн тавтуса, туя чĕнĕ? Курасчĕ, мĕнле пăхкалăн-ши эс ун чух, маттурланса килнĕ Никандр çине?

Тамара. Курасчĕ, хăçан чĕлхӳ çине ӳпне çăпан тухĕ-ши санăнне? Палкаса ларатăн, çав плана туса пĕтерейместĕн. (*Тухса каять*).

Мышкин. Турăçăм. Пуç çаварăнса каймалла! Çав хĕрсене пула нимĕн чухлĕ те ĕçлей-



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА

мерĕм паян. Ик кайăка хăвалакан пек, пĕрре-сĕр тăрса юлăп-и-ха?! Ĕçрен тухса ўкес марччĕ тата! Пурте: „Кивĕ счетовод, кивĕ счетовод“, теççĕ. Ну, Мышкин, шик! шăхăрса пурăнасси пĕтрĕ сан! Ĕçе тытăнас пулать!

*ЧАРШАВ.*

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Урам. Икĕ кил хушши. Пĕр енче Мирон Михалчсем пурăнаççĕ, тепĕр енче Василий Захарчсем. Вĕсем хушшинче çўллех мар çатан карта. Урамра ватă йамра ларать.

Василий Захарчпа Улюна кĕреççĕ.

Василий Захарч. Пурте кĕриччен, чĕлĕм туртса ярам-ха çакăнта ларса, атту Праски табак шăршине юратмасть. (*Пўрт çумĕнчи каска çине ларать*).

Улюна. Урамра ĕççĕр каранса ларасси çеç юлнă ĕнтĕ.

Василий Захарч. Ан хирĕç-ха. Пыр, пĕреххутчен, кўрĕше кайса сăра лартма çĕпре илсе кил.

Улюна. Мĕн тăван сăрапа? Ахаль те ĕçтерсе янă вĕт-ха сана?

Василий Захарч. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç, теççĕ. Никандр таврăнсан, хăнана чĕнес пулать.

Улюна. Пулмасть.

Василий Захарч. Мĕн пулмасть?

Улюна. Кўршĕсене хăнана чĕнесси.

Василий Захарч. Мĕн эсĕ? Мĕн кирлĕ мара калаçатăн?

Улюна. Хăть вăрç, хăть ятла—чĕнме пултараймастăп.

Василий Захарч. Мĕн сăлтавпа? Çавна каласамччĕ, иçмасса.

Улюна. Хăвах пĕлетĕн. Вĕсемпе пĕрле нихăçан та ĕççе-çимĕп тесе турă умĕнче тупа тунă эпĕ.

Василий Захарч. Эккей, инкек тупнă! Çавна халь те манман-и эсĕ? Тархасшăн сынна ан култар, карчăк.

Улюна. Нимĕн кулмалли те çук. Турра манман-ха эп, чуна сутма.

Василий Захарч. Ун пек кивĕ çылăхсем тахçанах каçса пĕтнĕ вĕсем. Колхозченех пулса иртнĕ япалашăн халь те кўршĕсемпе хирĕçсе пурăнас-и? Пĕлессў килсен, эпир паян Мирон Михалăчпа пысăкрах ĕç çинчен те калаçса илтĕмĕр-ха.

Улюна. Мĕнле пысăк ĕç тата вăл?

Василий Захарч. Ара, вĕсен ывăлĕ çартан таврăнать, пирĕн—хĕр ўссе çитĕннĕ...

Улюна. Кўрĕше хĕр париччен, Караçа киле кĕртетĕп. Ĕçкунĕсем те çухалмĕç ун чух.

Василий Захарч. Эс кĕртĕн те, анчах Праски йышăнмĕ.

Улюна. Ман сăмахран иртес çук вăл—чарусăр хĕр мар.

Василий Захарч. Пурнăçран кая тăрса юлнă эс, карчăк, авалхилле калаçатăн.

Улюна. Эс пит мала кайнă! Атя, кĕрсе çи те, пахчана ĕçлеме тухăпăр. (*Кĕрсе каять*).

Василий Захарч (*тăрса ун хыççăн утать*). Сăрине лартасах пулать, карчăк: хатĕрри пăсмасть, теççĕ. (*Кĕрсе каять*).

Никандрпа Праски кĕреççĕ. Иккĕшĕ те ялалясем йăтнă. Праски пĕр аллинче хайхи чечек çыххи. Вĕсем вăтă йăмра тĕлне çитсен, чарăнаççĕ.

Никандр (*чемоданне çĕре лартса картусне хывать те, хăйсен пӳрчĕ еннелле пуç тайса саламлать*). Сывă-и, тăван кил-çурт! Кĕтсе илĕр хăвăр ывăлăра, юратнă атте-анне!

Праски. Килте çук пулас-ха вĕсем. Аçу, ĕлĕкхи пекех, утарта ĕнтĕ вăл: аннӳ—чăх-чĕп ферминче.

Никандр. Ватăлмаççĕ-ха эппин вĕсем, çаплах ĕçлеççĕ? Аван, аван. Кил-çурт та чип-чиперех ларать, юхăнтарса яман.

Праски. Тăрăшаççĕ-ха. Никандр телейĕшĕн пултăр, теççĕ. Ир те, каç та: „Никандр таврăнсан, Никандр таврăнсан" тени çеç илтĕнсе тăрать.

Никандр. Таврăнтăм ĕнтĕ халь. Пилĕк çул иртрĕ вĕт! Ав, мĕнле пулса кайнă эсĕ!

Праски. Ватăлнă.

Никандр. Çук,—чиперленнĕ! Миçе ыйтса çырсан та карточкуна ярса памарăн. Эп ăна кунĕн-çĕрĕн пăхса савăннă пулăттăм. Чăнах мĕнле чиперленсе кайнă эсĕ!

Праски (*вăтанчĕ*). Фермăна кайса, аннўне чĕнсе килем-ха.

Никандр. Тăхта, Праски... Ан васка-ха. Васкамасăр савăнам киле çитнĕ ырлăхпа... Килте-çке эпĕ! Мĕн тери ырă халь мана! Çак йăмрапа çине пăхса киленесси кăна—мĕне тăраты! Мĕн ачаран ун айĕнче выляса ўснĕ вĕт эпир.

Праски. Астăвап ха эпĕ: эс яланах, ав, çав çўлти турат çине хăпарса ларăттăн та, „куккук, куккук“, тесе кăшкăраттăн.

Никандр. Пĕррехинче сан аннў манран: „Куккук, куккук, эп тата миçе çул пурăнап?“ тесе те ыйтнăччĕ. (*Иккĕш те хавассăн кулаççĕ*).

Праски. Кăçал çуркунне кунта чăн-чăн куккуках ларса авăтрĕ. Эп тўрех сана аса илтĕм.

Никандр. Лар-ха, Праски, ларсах калаçар.

Праски. Аюк, Никандр. Кăнтăр кунĕнчех ун пек ларса тăрас мар пуль. Çынсенчен аван мар. Анне те, курсан, ятлаçĕ.

Никандр. Аннўнтен çаплах хăратăн-и?

Праски. Хăрани-мĕнĕ... намăс-çке-ха.

Никандр (*йăмра айĕнчи сак çине ларать*). Тĕлĕнетĕп эпĕ, ма çав тери вăтанаççĕ-ши пирĕн чăваш хĕрĕсем?

Праски. Чăваш хĕрĕсем çеç вăтанаççĕ-им? (*Шўт туса*). Хăвна валли мĕншĕн хăюллăраххине тупса килмерĕн?

Никандр. Шыраман. Шырасан, тупма пулатчĕ пуль те...

Праски. Пире вĕрентме пултараканнине тупса килнĕ пулсан, пит аван пулатчĕ.

Никандр (*Праски куçĕсенчен пăхса*). Хамăр колхоз хĕрĕсем асран каймарĕç-çке.

Праски. Уйрăмăнах—пĕри пуль?

Никандр. Пĕри те çитет. Мана нумай кирлĕ мар.

Праски. Епле ăшшăн кĕтсе илчĕ вăл сана! (*Аллинчи чечек сыххине кăтартать*).

Никандр. Куçсем çивĕч сан,—курса ĕлкĕрнĕ! Анчах та эп ăна мар, ак çак çĕмĕрт пек, хура куçсене асра тытнă. (*Ун куçĕнчен пăхать*).

Праски (*вăтанса*). Кунĕпех капла урамра ларайман, чĕнсе килем аннўне. (*Чечекне Никандр еннелле тăсать*).

Никандр (*илмесĕр*). Ан тив, санрах юлтăр.

Праски. Эп татах татма пултаратăп.

Никандр (*ун куçĕнчен пăхса*). Эс татнă-и ку чечексене? (*Илет*).

Праски. Кирек кам татнă пулсан та, сан валли ўснĕ вĕсем.

Никандр (*чечексене шăршласа*). Мĕнле тутлă! Ешĕл çаран çинче çўренĕ пекех туйăнса кайрĕ. Çакăн пек, миçе тĕрлĕ хитре чечексем ырă шăршă сарса ларассĕ унта! (*Праски шăппăн тухса каять*). Эс вĕсене çавапа чашлаттарса çулатăн та, вĕсем, паккус хыççăн паккус йăванса юлассĕ. Кайран, типсе утă пулсан, мĕнле ырă вара ун çинче выртса канма! Ох, çав вăхăтсем фронтра аса килетчĕç! Вăхăт çитрĕ! Кăçал эпĕ те каллех утă çулма тухатăп ĕнтĕ.

Çуммăн тăрса çулăпăр, Праски. (*Пуçне çĕклесе Праски ларнă енне пăхать*). Ой, çук та! Хăçан, ăçта шунă вăл? Мĕнле маттур хĕр... çак чечексем пекех! (*Чечексене шăршлать*).

Тамара килсе кĕрет.

Тамара (*Никандра курать*). Пĕчченех ларать. Ах ман чечексене чупăвать! (*Хыçалтан пырса Никандрăн куçĕсене аллисемпе хуплать*).

Никандр. Кам-ши ку?

Тамара. Кама саван?

Никандр (*шӳт туса*). Сана.

Тамара (*сасартăк Никандра майĕран ыталаса илет те пуçĕпе унăн пичĕ çумне лăпчăнать*). Ах, Никандр!..

Никандр. Тамара?

Тамара. Тинех ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ! Мĕн тери кĕтсе пурăнтăм эп сана! (*Никандра çӳçрен якатса ачашлать*).

Никандр. Тăхта-ха Тамара... (*Ура çине тăрать*). Ытла та мĕн-çке капла... Çынсем курĕç...

Тамара. Курччăрах. Халь ĕнтĕ сана юратнине никамран та пытармастăп.

Никандр (*ним калама аптраса*). Ак, хăямат!.. Мĕн-çке-ха капла... Мĕнле пулса тухрĕ-ха ку? Эп, мĕн вĕт, вылятса çеç каларăм, Тамара. Каçар, тархасшăн...

Тамара (*именсе каять*). А çыру?

Никандр. Мĕнле çыру?

Тамара. Ман çырӑва хирӗç: „вӑрçӑ хыççӑн пӗрле пулӑпӑр"—тесе, ху ответ патӑн-çке?

Никандр. А-а, эп ун çинчен мансах кайнӑ. Анчах та эсӗ ман сӑмахсене йӑнӑш ӑнланнӑ ун чух.

Тамара (*тӗлӗнсе каялла чакать*). Йӑнӑш?

Никандр. „Пӗрле пулӑпӑр" тени—„пӗрлешӗпӗр" тени мар-çке вӑл? Халь, акӑ, таврӑнтӑм та—пӗрле пултӑмӑр; санпа та, ытти ялйышсемпе те...

Тамара. Мӗнле улталаннӑ эпӗ! Эх, намӑс! (*Чупса тухса каять*).

Никандр (*ун хыççӑн*). Тамара, тӑхта-ха... Тамара!.. Вӑт хӑямат... Ним кӗтмен çӗртен... Шеремет хӗрачи... Мӗн туса хутӑм-ха? Вӑл юратать, а эпӗ—пуç тӑрӑх сивӗ шывпа... Ытла та хӑюллӑ! Вӑт чӑваш хӗрӗ те ӑна! Фу-у, хам та чӑм шыва ӳкрӗм. (*Тутӑр кӑларса пит-куçне шӑлать. Аяккалла пӑхса*). Анне килет... Мӑнтарӑн! Урисем те çӗре тивмеççӗ.

Мавра ыткӑнса кӗрет.

Мавра. Никандр! Ачам!.. (*Пӗрне-пӗри ыталаса илеççӗ*).

Никандр. Анне!.. (*Амӑшне вӗçӗмсӗр чуптӑвать*).

Мавра (*ывӑлне çупӑрласа*). Ылттӑнӑм!.. Чӗппӗм!.. (*Саппун аркипе куççульне шӑлать*).

Никандр. Ну, ну... Мӗнле паттӑр эсӗ, пӗрре те ватӑлман.

Мавра. Ватӑлтӑм ҫав, ачам.

Никандр. Атте мӗнле?

Мавра. Аҫу та ватӑлчӗ ӗнтӗ. Хуйхи нумай пулчӗ-ҫке, ачам. Ҫамрӑккисем те шуралчӗҫ те... Ав, хӑвӑн та шурӑ ҫӳҫ пӗрчисем курӑнаҫҫӗ.

Никандр. Ҫамӑлах пулмарӗ ҫав, анне. Нумай юн, нумай вӗри куҫҫуль юхрӗ ҫӗр ҫинче.

Мавра. Леш йытӑсем ҫаплах вӑрҫӑ ҫивчен шавлаҫҫӗ тет-и-ха? Ҫаплах халӑха лӑпкӑн пурӑнма памаҫҫӗ вӗт.

Никандр. Йытӑ йытах ӗнтӗ вӑл,—вӗрет те вӗрет. Шавлаччӑрах вӗсем. Анчах пирӗн Сталин урӑхла калать: „Халь вӑрҫӑ пулас хӑрушлӑх ҫук", тет вӑл. Ахаль-им пире киле ячӗ вӑл.

Мавра. Тавтапуҫ ӗнтӗ ӑна, вӑл пулман пулсан—тем те курса ларнӑ пулӑттӑмӑр. Ӑҫтан вӑхӑтне тупать пуль тулькӑ. Сана танк илсе панӑшӑн, пире те салам ярса сума-сурӗ вӗт. Телеграммне аҫу, тутӑрпа чӑркасах, арча тӗпӗнче усрать. Никандр таврӑнсан—ӑна кӑтартатӑп, тет. Эсӗ, ав, таврӑннӑ,—эпир килте те ҫук. Юрать, Праски пӗлтерчӗ. Аҫу патне чупрӗ-ха вӑл.

Никандр. Праски атте патне чупрӗ-и?

Мавра Ҫунат хушсах вӗҫрӗ.

Никандр. Маттур!

Мавра. Мӗн каласси пур, ачам! Маттур пулмасӑр! Пӗтӗм колхоз юрататъ ӑна. Атя, ачам, пӳртелле кӗрер ӗнтӗ, калаҫса сӑмах пӗтмӗ кунта. (*Никандрӑн чемоданне йӑтма тӑрать*).

Никандр (*васкаса пырать.*) Тăхта, анне, эп хамах... Хутаçне те хамах. (*Япалисене йăтать*). Малашне эп сана нимĕн те йăттармастăп.

Мавра. Уншăнах аптрамăп-çке. Пĕччен йывăртарах пулĕ. (*Кĕрсе каяççĕ*).

Улюнапа Василий Захарч хăйсен пӳртĕнчен тухаççĕ.

Василий Захарч. Ĕшентĕм паян хир тăрăх çӳресе. Апат хыççăн пăртак выртса канмаллаччĕ.

Улюна (*Василий Захарча хусăк илсе пырса тыттарать*). Кайран канăн. Шăмшак сурать—çумăр пулать пулмалла, унччен хăлтăласа пĕтересчĕ çав йăрансене. Çынсем, ав, хăяр сутма пуçланă, тет. Пирĕн халь тин кăна чечеке лараççĕ. Çуркунне пĕччен пурне те вăхăтра акма ĕлкĕреймерĕм; эсир пĕрехмай колхоз ĕçĕнче пултăр.

Василий Захарч. Тăхта-ха акă, колхозран хăярне те, ыттине те лавĕ лавĕпех тиесе килсе парăп.

Улюна. Ытлашши пăсать-им? Ну, атя... (*Пахчаналла кĕрсе каять*).

Мышкин васкаса кĕрет.

Мышкин. Тăхта-ха, Ваçак пичче.

Василий Захарч. Мĕн каласа савăнтарас тетĕн?

Мышкин. Мĕн вĕт, Ваçак пичче, шыраса

тупрăм сан ĕçкунĕсене. Пăнимаеш, Тамара йăнăш папкă ăшне çĕлесе хунă.

Василий Захарч. Çын сине йăвангаратăн?

Мышкин. Чăнах, чăнах. Списока тӳрлетсе çыртăм халь. Сан пĕр хăвăн çеç çĕр те вунçичĕ ĕçкунĕ пулнă. Маттур эсĕ, ватă пулсан та çамрăксенчен ирттеретĕн.

Василий Захарч. Шыраса тупрăн эппин? Хăрарăн Василь Иванча каласа парасран?

Мышкин. Урăх нихçан та ун пек пулас çук, Ваçак пичче.

Василий Захарч. Юрĕ, юрĕ. Ĕçле. Анчах манса ан кай, йĕркесĕр хăтланма пуçласан, каларса та сирпĕтĕç; ĕçлеме пултаракансем нумай халь; пĕлетĕн, депутатсене те хамăр хушăранах суйлатпăр. Вăт çав... (*Пахчаналла тухса каять*).

Мышкин. Пыр та ăнлан! Мĕн каласшăн пулчĕ вăл? Те ман майлă, те...

Пусма умне Никандр тухса çăвăнма пуçлать.

Салам, воин юлташа!

Никандр. А-а, Караç! Хĕрӳллĕ салам! Уссине ӳстерсе янă та—паллама та çук сана.

Мышкин (*шӳт туса честь парать*). Гварди кĕçĕн сержанчĕ—Герасим Лукич Мышкин!

Никандр Маттур, гварди кĕçĕн сержанчĕ! Паттăр çапăçнă!

Мышкин (*çаплах çĕкленсе*). Тăван çĕршывшăн çапăçрăмăр, старшина юлташ! Эсĕ манран та ирттернĕ пулас?

Никандр. Мухтанмалли нумаях мар. (*Çăвăнса пĕтерет*). Атя, кĕрсе лар, Герасим Лукич; колхозра мĕнле ĕçлени çинчен каласа кăтартăн.

Мышкин. Тӳрех: „колхозра мĕнле ĕçлени çинчен!" Фронтра мĕнле çапăçни çинчен ыйтасшăн мар.

Никандр. Куратăп, унта начар çапăçман эсĕ.

Мышкин. Кунта та маххă памастпăр эпир, фронтовиксем.

Никандр. Аван, аван. Счетовод терĕç сана?

Мышкин. Туса лартрĕç-ха. Пит кĕресшĕн марччĕ те...

Никандр. Ма апла?

Мышкин. Чăкăлтăш ĕç.

Никандр. Эп халь пур ĕçе те тунсăхласа çитрĕм, кĕтӳ кĕтме те хатĕр.

Мышкин. Кăна эс ирттерсе калан та-ха...

Никандр. Чăнах, ара. Мĕне тăрать илемлĕ те лăпкă уй-хир тăрăх юрласа çӳресси! Кувĕн-çĕрĕн танк ăшĕнче ларасси мар.

Мышкин. Ку çаплах.

Никандр. Анчах кĕтĕве ăна ачасем те кĕтме пултараççĕ. Ман валли Василь Иванч урăх ĕç хатĕрлесе хунă. Фронтра—танкистчĕ эпĕ, кунта шофер пулатăп.

Мышкин. Пит аван! Çулсем чаплă халь пирĕн—хăть Шупашкара, хăть Мускава вĕçтер.

Никандр. Ма кунта тăратпăр эпир? Атя-ха пӳрте... Фронтовикпа фронтовик çапла тĕл пулмалла-и?

**Мышкин.** Вăхăт çукчĕ те... Самантлăха кĕрсе тухам эппин (*Кĕрсе каяççĕ*).

Улюна хыпаланса килсе пӳрте кĕрсе каять те часах каялла тухать.

**Улюна.** Алăк сасси илтĕннĕрен, Праски килчĕ пуль терĕм. Ăçта çĕр çăтрĕ вăл хĕрачана! Çынсем паçăрах апата таврăнчĕç, вăл çаплах çук.

Салхулланнă Тамара хуллен утса килет.

**Тамара.** Праски килте-и, Улюна инке?

**Улюна.** Çавăн пирки ятлаçмастăп-и! Таçта çĕтсе çӳрет. Мĕн тума кирлĕ пулчĕ тата?

**Тамара.** Василь Иванч пĕр ĕç хушрĕ те... ме-ха, çак хута пар ăна, килсен. (*Улюнана Василий Иванч çырнă хута парать*).

**Улюна.** Пĕр ĕç мар, çĕр ĕç те тăвать пуль вăл кун каçиччен. Çитмен тĕлĕ те çук: çынсем акнă чух—акать, çумланă чух—çумлать. Чăхчĕп картине те тасатса парса пулăшать çынсене... (*Кӳршисем енне пуçне сулса илет*).

**Тамара** (*хĕтĕртсе*). Вĕсенне тасатмасăр, камăнне тасаттăр тата? Пулас хунямăшне юрасах пулать ĕнтĕ ун. Леш хăй, Праские кин тусан, урай çума та ямĕ-ха ăна сан патна.

**Улюна.** Вĕсене хĕр париччен, вăрманти упана парса яратăп.

**Тамара.** Ай, ан та калаç. Сисмесĕрех юлăнха акă. Эп, сан вырăнта пулсан, тытăттăм та Караçа киле кĕртĕттĕм. Пĕлетĕн-и, мĕнле çунать вăл Праскишĕн?

Улюна. Эсĕ ăçтан пĕлетĕн?

Тамара. Куллен пĕрле ĕçлесе ларатпăр та, калаçмасăр пулать-и? Ăна киле кĕртсен, ватăлмалăх кунра çын патне йăлăнма каймăттăр çав.

Улюна. Кӳрентертĕм-ха эп ăна паян, ятлаçрăм унпа.

Тамара. Кӳренме пĕлмест вăл, характерĕ çав тери аван унăн.

Улюна. Эппин, ху мĕншĕн качча тухмастăн ăна?

Тамара. Эпĕ вĕренме каятăп... (*Куçайĕн чеен пăхса*). Тата—мана илес те çук вăл.

Чăх кăтикленӗ сасă илтĕнет.

Улюна. Ку мĕне пĕлтерет? Ман чăх кӳршĕрен кăтиклесе каçрĕ мар-и?

Тамара. Çăмарта туса каçрĕ пуль вăл унтан. Чăхсем кӳрĕше çăмарта тусан, телей кӳрĕше куçать тетчĕ пирĕн асанне. Суя пуль вăл? Чăх мĕн пĕлет?

Улюна. Тьфу, тьфу!.. Ахалех сехрене хăпартса тăратăн. Каям та илсе килем акă. (*Кӳршисен лупас айнелле кĕрсе каять*).

Тамара. Эх, çак вăхăта Мавра инке килсе тухинччĕ!.. Турăçăм... мĕн калаçатăп эпĕ? Каяс кунтан часрах, куçăм ан куртăр.. (*Тухса каять*).

Пӳртрен Мавра тухса тӳрех лупас айнелле кĕрсе каять.

Мавра сасси. Çын йăвине ухтарса çӳреме намăс мар-и сана?

Улюна сасси. Сан ҫӑмарту мар, хамӑн. Халь анчах ман чӑпар чӑх ҫӑмарта туса каҫрӗ. (*Улюна тухать, ун хыҫҫӑн Мавра питлесе пырать*).

Мавра. Ҫынсем колхозра ӗҫлеҫҫӗ, эсӗ пур—килте ларса, ют йӑвасене ухтарса ҫӳретӗн.

Улюна. Мӗн эсӗ, „вӑрӑ" тесе каласшӑн мар-и тата мана? Кала: ҫапла-и?

Мавра. Ҫапла-и, ҫапла мар-и,—анчах пирӗн йӑваран пӗр аркӑ ҫӑмарта пухнӑ ав!

Улюна. Ӑҫта пӗр аркӑ? Ӑҫта пӗр аркӑ? (*Ҫавӑрса хутлатнӑ саппун аркине уҫса кӑтартать*). Пӑх, кур,—виҫӗ ҫӑмарта? Ман чӑпар чӑх виҫӗ кун килте ҫӑмарта тумарӗ.

Мавра. Тен сан чӑпар чӑхху ҫулталӑкӗпех ҫӑмарта тумӗ? Эс мӗн, ҫулталӑкӗпех ют йӑваран илес тетӗн-им вара?

Улюна. Ман чӑхсем ҫулталӑкӗпех ҫӑмарта тумаҫҫӗ. Симен кунӗччен анчах. Ак, тытса пӑх, пӗр ҫӑмарти халӗ те ӑшӑ.

Мавра. Илсе каях, унпах пуйса лараймӑн.

Мирон Михалч кӗрет. Вӑл кивӗрех хура пиншакпа шӑлавар тӑхӑннӑ, уринче атӑ, пуҫӗнче улӑм шӗлепке.

Улюна. Ах, мӑшкӑл!.. Мӗнпе хӑратасшӑн вӑл мана! Эпир сирӗннисӗрех пуян: паян кун та пӳлме тулли тырӑ пур пирӗн; карта тулли выльӑх...

Мавра. Ху ҫапах та ют йӑвасене ухтарса ҫӳретӗн. Хыткукар эсӗ, такам та пӗлет эс хыт-

кукар иккенне. Урамра турпас выртнине курсан та, килне йӑтса кӗретӗн.

Мирон Михалч (*чӗнмесӗр итлесе тӑнӑ хыҫҫӑн*). Тӑхтӑр-ха, чакаксем. Мӗн чаклатма пуҫланӑ эсир?

Мавра. Лупас айне ҫӑмарта илме тесе тухрӑм та, ҫак „ырӑ ҫын" пӗтӗм йӑвана ухтарса пӗтернӗ.

Улюна. Ман ҫӑмарта! Ман чӑх туса анчӗ! Эп курман чух, тырӑ сапсах илӗртетӗн пуль-ха. Пире сиен тума вӗреннӗ эсӗ; манман-ха эп ӗлӗкхине те, питӗ лайӑх астӑватӑп, ӗнене те нӳхрепе ярса вӗлертӗн.

Мавра. Ах, тур-тур, мӗн калаҫать вӑл! Эп тӗксе янӑ-им ӑна нӳхрепе?! Ҫынна ахаль айӑплатӑн, ҫылӑхӗ хӑвна пултӑрах!

Мирон Михалч (*арӑмне*). Чарӑн-ха. (*Улюнана*). Эс, Улюна, ҫаплах кивӗ йӑлана пӑрахмастӑн. Мӗнле намӑс мар сана? Тахҫан иртсе кайнине ма асӑнатӑн халь? Юри туман, ӑнсӑртран пулнӑ вӑл. Тахҫанах манма вӑхӑт ун ҫинчен. Вунҫичӗ ҫул колхозра пурӑнатпӑр...

Пахча енчен Василий Захарч тухать, ун хыҫҫӑнах урамран Праски кӗрет.

Улюна. Мана ан вӗрент! Вӗрентекенсем ман хамӑн та пур.

Мирон Михалч. Пур ҫав, пур. Ӑслӑ старикӳ пур, чӗкеҫ пек хитре те пыл хурчӗ пек ӗҫчен хӗрӳ пур. Вӗсене пӗтӗм колхоз

хисеплет; районра чапа тухнă вĕсем. Анчах та эс вĕсене намăс кăтартатăн.

Мăвра. Чăх çăмартишĕн çапла харкашать те вăл!

Улюна (*Василий Захарча*). Мĕн чĕлхÿне çыртса тăратăн? Илтместĕн-им, епле иккĕн харăс хăртаççĕ вĕсем мана?! (*Аркă çинчи çăмартасене лупас урлă вăркăнтарма пуçлать*). Ме, çи, тăран! Мана та ан пултăр, сана та!

Праски (*амăшĕ патне ыткăнса*). Анне, мĕн хăтланатăн эсĕ!

Улюна (*Праские тĕксе ярать те татах ывăтать*). Пуçна пултăр! Ман чăх мар, хура çăхан çăмарта тутăр сан йăвуна! Тьфу!..

Василий Захарч. Карчăк!.. Мĕн урса кайрăн эс паян?

Праски. Анне!.. Никандр пĕлсен мĕн калĕ?!

Улюна (*Праские*). Парăп сана Никандр!.. Кĕр пÿрте, çÿçĕнтен тытса сĕтĕриччен! (*Кĕрсе каять, ун хыççăн Праски те кĕрсе çухалать*).

Василий Захарч. Мĕне пĕлтерет ку, Мирон Михалч?

Мирон Михалч. Хăйĕнчен ыйт, Василий Захарч: мĕне пĕлтерет ку ухмаҳла харкашу, эпĕ ăнланмастăп.

Улюна каялла сиксе тухать.

Улюна (*аллипе картиш варринчи çатана тĕллесе*). Паянах, халех, çак çатан вырăнне хÿме хÿсе ларт! Мунча çи витме туяннă чус

хăмине те ан хĕрхен. Куçăм ан куртăр вĕсене! (*Каялла çил пек ыткăнса кĕрет*).

Мирон Михалч (*шĕлепкине хывса Василий Захарча пуç таять*). Сыв пулса тăр-ха, Василий Захарч. Хĕме хĕсе лартсан, часах кураймăпăр пĕр-пĕрне. (*Маврана*). Атя, амăшĕ, кĕрер. Ывăла курас часрах, ывăл таврăнна вĕт-ха пирĕн! (*Кĕрсе каяççĕ*).

Василий Захарч. Ак сана туй!

*ЧАРШАВ*

## ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ.

### Малтанхи пайри сцена.

Мышкинпа Улюна

Улюна. Каласа пар ĕнтĕ, миçе ĕçкунĕ вĕсен? Пирĕннинчен ытларах-и, е каярах?

Мышкин (*аллипе кăтартса*). Çав списока мĕншĕн çырса çакнă эпĕ? Кашнинех каласа ларсан, хăçан ĕçлемелле ман?

Улюна. Кашнине мар эс, мана çеç кала.

Мышкин, Эсĕ мĕн, турă амăшĕ-им?

Улюна. Ытла та тӳрмен-çке эсĕ! Шăттавут пулнă та, мăнаçлансах кайнă. Марукак аванччĕ... Никандр та сан пек пулман...

Мышкин. Никандр счетовод мар халь, шофер. Унта луччĕ лайăх ăна. Кунта ак, пуçа ватса лар. Тата сан пеккисем килсе чарман-тарса çӳрĕççĕ.

Улюна. Йывăр пуль сана пĕр саманта тăрса пăхса илме?

Мышкин. А сана—йывăр-им? Вулама пĕлетĕн вĕт эс; ликбеза чĕнме хам пыраттăм ача чух.

Улюна. И-и, унтанпа пĕр ĕмĕр иртнĕ те, ăçтан астăван?

Мышкин. Астăвас пулать. Кĕнекесем, хаçатсем вулас пулать.

Улюна Ман вырăнна Праски вулать. Еçе кайнă чух та кĕнеке чиксе каять. „Каннă вăхăтра вулатпăр“ тет.

Мышкин. Праски вулани мĕн вăл? Эс ху вула.

Улюна. Çапла пулмасăр! Алла кĕнеке тытса ларасси çеç юлнă ĕнтĕ ман.

Мышкин. А мĕн ĕç пур сан урăх? Манăн, ак, ĕнсене хыçма та вăхăт çук та, эп çапах, çак эрне хушшинче икĕ кĕнеке вуласа тухрăм. Юрамасть халь унсăрăн.

Улюна. Калаçатăн кирлĕ мара! Эпир те кĕнеке вуласа ларма пуçласан—чăхсем кулĕç.

Мышкин. Ан хăра, кулмаççĕ. Мавра инке, ав, ятарласах кайăк-кĕшĕк çинчен калакан журнал çырăнса илет. (*Иронипе*). Çавăн та ăна сан чăххусем те ытларах юратаççĕ.

Улюна. Ман чăх мар, шуйттан юраттăр ăна! Хура çăхан илештĕр ун йăвине!

Мышкин. Мĕнле ылхансан та, санран ирттерет вăл. (*Тăрса список патне пырать*). Эс кăçал пурĕ те 21 ĕçкунĕ анчах тунă, Мавра инкен, ав, халех 161 ĕçкунĕ пулнă.

*Улюна.* Стариккипе иккӗшӗн миҫе? Ҫавна кала эсӗ.

*Мышкин.* Халех... Мирон Михалчӑн... 177 ӗҫкувӗ, иккӗшин пӗрле... (*Сӗтелли патне пырса шут шӑрҫине туртать*) виҫҫӗр вӑтӑр саккӑр. Ҫулталӑк пӗтиччен тагах тепӗр ҫавӑн чул тӑваҫҫӗ. (*Шут туртать*). Никандрӗ ӗҫлеме тытӑнчӗ... Тырӑсем лайӑх кӑҫал... Вӑт пуяҫҫӗ! (*Хӑй вырӑнне кайса ларать*).

*Улюна.* Эпир те вӗсем патне кӗленме каяс ҫук. Тупнӑ кама мухтама! Пӗри—утарта вырт-нӑшӑн ҫавӑн чухлӗ ӗҫкунӗ илет; тепри—чӑх-сене янтӑ тырӑ сапса панӑшӑн...

*Мышкин.* Пӗлетӗн-и, мӗн чухлӗ тупӑш параҫҫӗ вӗсем колхоза?

*Улюна.* Вӗсен тупӑшӗпе эпир ҫил арманӗ лартас ҫук.

*Мышкин.* Эсӗ ху ахалех ҫил арманӗ авӑртса ҫӳретӗн. Пӗтӗм ял ҫапла калать.

*Улюна.* Ҫынсем мӗн каламӗҫ! Вӗсем мана та: „Караҫ сирӗн Праски патне киле кӗресшӗн", теҫҫӗ.

*Мышкин.* Каласа хучӗ! Кам ухмах киле кӗрет сирӗн пата? Эс ятлаҫнине итлесе пурӑ-виччен, ӗмӗр хусах пулса пурӑнам.

*Улюна.* Пурӑнах эппин! (*Тухса каять*).

*Мышкин.* Аран тухса кайрӗ. Вӑт аташса ҫӳрет. Ӑҫтан сыхланса юлнӑ ун пек этем пирӗн колхозра? Старикки те, хӗре те—ҫын пекех; а вӑл...

Тамара килсе кӗрет.

Тамара. Ма кӳрентертӗн Улюна инкене?

Мышкин. Ӗлкӗреймерӗн! Пӗлетӗн-и, мӗнле калаҫу пулса иртрӗ кунта? Праскийӗ патне киле кӗртесшӗн вӑл мана!

Тамара. Мӗн пӑхса тӑратӑн? Яра пар!

Мышкин. Саншӑн пурпӗрех эппин? Эх, Тамара!.. Тиркерӗн мана. Анчах асту: „тирке-кене—тиркӗ тӗпӗ", теҫҫӗ.

Тамара. Ан хӑрат, Герасим Лукич. Кам авланас, качча тухас текенсӗм—авланччӑр, качча тухчӑр; эпӗ вӗренме каятӑп.

Мышкин (*иронипе*). Артистка пулма-и?

Тамара. Тен агроном пулма та пултарӑпӑр.

Мышкин. Чӑнласах-и эс?

Тамара. Акӑ... (*Ҫыру кӑтартать*). Пӗр-кун, хулана хӑяр сутма кайсан, документсене парса хӑвартӑм та, паян ответ килчӗ.

Мышкин (*тӑрса*). Ӑҫта, ӑҫта?.. (*Тамара аллинчи ҫырӑва пырса пӑхать*). Чӑнах та!.. Маттур, Тамара!

Тамара (*кантӑк енне пӑхса, такама каланӑ пек*). Каятӑп! Сулхӑнра ларать, теҫҫӗ. Агроном пулса килем-ха; унчух курӗҫ Тамара та пӗлӗтрен татӑлса ӳкменнине. Унчух Праски хӑй те ман пата вӗренме ҫӳрӗ-ха.

Мышкин. Эпӗ те санпа пӗрле пырӑттӑм та, анчах эп ҫичӗ ҫул кӑна вӗреннӗ ҫав... (*Ассӑн сывласа ярать*).

Тамара (*ун пуҫне якатса*). Эх, Гера, Гера!..

Мышкин. Яланах Караҫчӗ, халь—Гера, тетӗн.

Тамара. Герасим, — ачашласа каласан — Гера пулать пуль?

Мышкин (*савăнса*). Ачашласа? Ачашласа тетĕн? Тамара!.. Çутă хĕвелĕм!.. (*Ăна ыталама хăтланать*).

Тамара (*пăрăнса*). Кирлĕ мар, Герасим Лукич.

Мышкин. Тамара! Ан тарăхтар!.. Юрататăн вĕт эс мана?

Тамара. Çук. Пĕр харăс икĕ çынна юратма пултараймастăп эпĕ.

Мышкин. Эппин çаплах ăна юрататăн? (*Сĕтел çинчи хучĕсене васкаса сĕтел сунтăхне чикет те тухса каять*).

Тамара (*салхуллăн*). Ăнланатăп эп сана, Герасим Лукич, анчах ним тума та пултараймастăп. (*Машина сасси. Тамара сиксе тăрса чÿречерен пăхать*). Хуларан таврăнчĕç... Электростанци валли пралуксем илсе килнĕ. Ав, Никандр кабинăран тухрĕ... Василий Иванчпа калаçса тăрать. (*Каялла чакса*). Кунталла пăхать... Кĕрсе пĕр-икĕ сăмах калинччĕ хăть... Çук, çук!.. Кирлĕ мар. Пĕтнĕ, пĕтнĕ!.. Кĕлмĕç пек, чÿрече умĕнче тилмĕрсе тăрас мар. (*Пăрăнать, анчах сĕтел патне çитсенех, каялла çаврăнса чÿрече патне пырать*). Хупса ларгам чÿречене... Кунта килеççĕ! (*Ыткăнса хăй вырăнне кĕрсе ларать*).

Василий Иванч тата кăвак комбинезон тăхăннă Никандр кĕреççĕ.

Василий Иванч (*Тамарăна*). Пĕччене́х ларатăн-ççке эсĕ? Герасим Лукич ăçта?

Тамара. Каласа каймарĕ.

Василий Иванч. Хуларан илсе килнĕ япаласене йышăнас пулатчĕ... (*Хăйĕн пӳлĕмне кĕрсе каять*).

Никандр. Сывă-и, Тамара?

Тамара. Тавтапуç, сывă-ха.

(*Чĕнмеççĕ*).

Никандр (*ларса*). Кичем пуль пĕччен ларма?

Тамара (*иронипе*). Çук. Ташлатăп, юрлатăп... вăхăт иртни те сисĕнмест.

Никандр. Каçар, ухмахла ыйтрăм. Хамах пĕлетĕп. (*Мышкин сĕтеллине кăтартса*). Çак сĕтел хушшинче эп икĕ çул ларнă.

Тамара. Шеллетĕн-им?

Никандр. Çук. Тĕлĕнетĕп: епле тӳснĕ-ши пăчăхса ларма, тетĕп.

Тамара (*иронипе*). Ун вырăнне халь аван ĕнтĕ сан: пĕрехмай унта-кунта çӳретĕн.

Никандр. Начар мар. Ĕнер каç, ав, хулара пит чаплă спектакль куртăмăр. Чăваш артисĕсем Ленинпа Сталин ролĕсене выляççĕ. Тĕлĕнмелле вĕт!

Тамара. Хулана кайсан, эпир те курăпăр-ха.

Никандр. Атя, манпа пĕрле; эп ыран татах каятăп.

Тамара. Тавтапуç! Кайма вăхăт çитсен,

поездпа та кайӑп-ха. Савпа ҫӳресе ҫынсене ҫилентерес мар.

Никандр (*пӗлмӗш пулса*). Кама?

Праски кӗрет.

Тамара. Ҫылӑхсӑрскер. Сӑмах ҫинех килсе кӗчӗ.

Праски. Калаҫӑр, калаҫӑр. Эп сире чӑрмантармастӑп. (*Председатель кабинетне кӗрсе каять*).

Тамара (*тӑрӑхласа*). Лайӑх арӑм пулать: кӗвӗҫмест.

Никандр. Кӑлӑхах эс, Тамара...

Тамара. Анчах, тыткалӗ-ха вӑл сана. Малтан йӑвашши кайран хаяр пулнӑ, тет. Амӑшӗнчен каях пулас ҫук: улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест, теҫҫӗ.

Никандр. Хӑвна ху культурлӑ ҫын пек тыткалатӑн, анчах юмаххусем—ватӑ кинемейӗнни пекех кивӗ. (*Председатель алӑкӗ патне пырать*). Кӗме юрать-и, Василь Иванч?

Василий Иванч (*кабинетран*). Кӗр, кӗр, Никандр Миронч.

Никандр кӗрсе каять.

Тамара (*хӑйне хӑй вӑрҫать*). Ухмах, эй ухмах! Ма хускатрӑм-ши! Касса тататтӑм ку чӗлхене! Ҫапах ҫакӑнта тӳссе ларатӑп. Пӗтӗм намӑса ҫухатрӑм... Часрах кӗркунне ҫиттӗрччӗ!.. Паянах Василий Иванчран ыйтатӑп: хӑтартӑр

мана ку ĕçрен. Ниçта тухмасăр испытанине хатĕрленетĕп.

Кабинетран Праски тухать.

Праски (*йăл кулса*). Мĕн калаçрăр-ха эсир ман çинчен?

Тамара. Эп сана мухтарăм, Никандр итлесе ларчĕ. Илтрĕн пуль, çылăхсăр, терĕм.

Праски. Тавтапуç! Анчах эп сана евĕче тытманччĕ пулас та-ха?

Тамара. Ырă çыншăн—ырă сăмах шел-им?

Праски. Ахаль лариччеп—кĕрĕк арки йăвала, теççĕ. Калас-ха Василь Иванча: пĕтертĕр кассир должнăçне, ахаль япăхтарса ан лартчăр кувта сана.

Тамара. Тархасшăн ан хирĕç; ман пĕрре те ятлаçас килмест.

Праски. Ятлаçса мар эпĕ, сана шеллесе калатăп. Шур-туна пекех шурса кайнă вĕт пÿртре ларса. Тухса çÿресен, хĕвел çиесрен хăратăн-им? Ан хăра, хĕвел çинче çырла пек хитреленсе каятăн эсĕ. Атя пирĕнпе пĕрле, сахăр кăшманĕ купалама. Хăяр татса çийĕпĕр. Астăватăн-и, мĕнле юрлаттăмăр шкулта вĕреннĕ чух? (*Юрласа*).

Пахчи, пахчи, хăяр па-ахчи,—
Хăяр çисе ÿсрĕмĕр...

Василий Иванч (*хăй пулĕмĕнчен*). Тамара!..

Тамара. Василь Иванч чĕнет. (*Кабине-*

*талла ыткăнать. Ана хирĕç Никандр тухать. Праски кайма тăрать. Тулта хĕрсем юрлани илтĕнет*).

Пахчи, па-ахчи-и, çырла па-ахчи-и,
Çырла çисе ўсрĕмĕр...

Никандр. Тăхта-ха, Праски.

Праски. Мана хĕрсем кĕтеççĕ.

Никандр. Кĕтчĕрех.

Праски. Ĕçеваскатпăр эпир.

Никандр. „Ĕç кашкăр мар, вăрмана тарас çук", тенĕ ваттисем.

Праски. Апла мар: „Çуллахи кун—çулталăк тăрантать", теççĕ вĕсем.

Никандр. Парăнатăп. Хăçан пăртак пушанăн-ши эсĕ? Каçпа та курма çук сана. Хăть пăртак урама тухса ларасчĕ. Каçсем мĕнле илемлĕ халь!

Праски. Çĕркаç тухса лартăмăр эпир.

Никандр Шел!—çĕркаç эп хулара пулнă.

Праски. Хулара пулнă—химикатсем илсе килмен. Пахча-çимĕçĕсем çинче хуртсем курăнкалаççĕ.

Никандр. Склад ĕçлемест, переучёта хупнă. Ыран татах каятăп.

Праски. Татах илсе килеймесен, асту эп сана!..

Никандр. Сан валли пулсан—çĕр тĕпĕнчен те тупса килетĕп!

Праски. Ман валли мар, колхоз валли.

Никандр. Ыран илсе килетĕпех.

Праски. Курăпăр. (*Кайма тăрать*).

Никандр (*ун аллинчен тытса*). Праски, илсе кай мана хăвпа пĕрле ĕçлеме. Эп пушах халĕ.

Праски. Мĕнле ĕç хушăп-ши сана?

Никандр. Хăть мĕнле ĕç, анчах санпа пĕрле пуласчĕ.

Праски. Машину пушă-и сан?

Никандр. Халех пушататпăр.

Праски. Тислĕк турттарма пултаратăн-и? Е утар патĕнчи тип кӳлĕрен—торф?

Никандр. Ăçта турттармалла?

Праски. Мулкач сăртне. Эпир халь унта та тырă акса тăватпăр вĕт.

Никандр. Анчах эс мана, тиесе-пушатса тăма, икĕ çын пар. Пĕри ху пул.

Праски (*кулса*). Юрать. (*Тухса каяççĕ*).

Василий Иванчпа Тамара тухаççĕ.

Василий Иванч. Аван, аван. Хамăрăн агроном пулать.

Тамара. Анна Ивановна та çапла калать: агрономсем ытларах кирлĕ, тет.

Василий Иванч. Пурте кирлĕ халь пире, Тамара: агроном та, врач та, инженер та... пурте. Эп хамăн Ванюка индустри енĕпе ярас тетĕп-ха. Мĕнчул заводсем ӳссе ларчĕç пирĕн республикăра!

Тамара. Ман вырăна урăх çын тупасчĕ, Василь Иванч. Манăн испытанине хатĕрленес пулать Акă, институтран килнĕ çыру.

Василий Иванч. Тупăпăр. Вăхăтлăха Герасим Лукич та ку ĕçе хăй çине илме пултарать. Тепĕр тесен, уйрăм кассир тытса тăма кирлĕ те мар пире. Эп ун пирки хамах калаçасшăнччĕ-ха правленире. Хутусене хатĕрле те,—ыран Герасим Лукича парăн.

Мирон Михалчпа Мавра кĕреççĕ.

Мирон Михалч. Сывă-и! Апат çисе ларатпăр та, амăшĕ калать: Василь Иванч патне кайса килес-ха, ĕç пур, тет. Эпĕ ăна: пĕрле кайăпăр, манăн та ĕç пур, тетĕп.

Василий Иванч. Каччăпа хĕр пекех эсир, ватăлма пĕлместĕр.

Мавра. Старике тунсăхларăм. Пĕрмай утарта. Хама—чĕпсем ямаççĕ ун патне.

Василий Иванч (*шӳт туса*). Ăс çитмен пирĕн, чăх-чĕп фермине утар çывăхне лартмалла пулнă. (*Кулаççĕ*). Ну, итлетĕп: мĕн ĕçпе килсеттĕр?

Мирон Михалч. Амĕш, эс калаç малтан.

Василий Иванч. Итлетĕп, Мавра Васильевна...

Мавра. Аплах ан кала-ха. Мĕн Васильевни эпĕ? Мавра инке тесен те юрĕ.

Василий Иванч. Инке—инке вăл, а Васильевна—Васильевнах. Сталин та хăйĕн телеграмминче—Мавра Васильевна, тенĕччĕ вĕт сана.

Мавра. Тата çĕр çул пурăнтăрччĕ вăл пире сума-сунăшăн... Эп ятлаçма тесе килнĕччĕ те, Василь Иванч, кăмăла çемçетрĕн эс манăнне.

Василий Иванч. Аййпла пулсан, ма ятлас мар. Мӗн те пулин йӑнӑш турӑм-ши?

Мирон Михалч. Ҫук, кладовщик кӳрентернӗ ӑна.

Мавра. Кӗрпе вырӑнне вир парасшӑн. Кӗрпе, тырӑ вырма тухсан, столовӑйра апат пӗҫерме кирлӗ, тет. Пӗчӗк чӗпсене вир ҫитерме юрать-и!? Тырра сая яни ҫеҫ.

Василий Иванч. Калӑп, Мавра Васильевна, кӗрпе парӗ. Вирне ҫуртарма ыранах „Молотов" колхозне яратпӑр. Пӗрре те Михеев куҫӗнчен пӑхас килмест те... Электростанци лартсан— кӗрпе арманӗ те хамӑрӑнах пулать акӑ.

Мавра. Эс мана хут ҫырса пар, Василь Иванч.

Василий Иванч. Ҫырса парас. (*Мышкин сӗтелли хушшине ларса ҫырать.*) Эс мӗнле ӗҫпе, Мирон Михалч?

Мирон Михалч. Ҫынсем тырӑ нумайрах туса илесшӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Манӑн пыл нумайрах туса илес килет. Анчах клевер пусси инҫе кӑҫал, люцернӑ та ҫывӑх мар. Мӗнле вӗсем—шӑкӑрах чечекре лараҫҫӗ халь, а хуртсене вӗҫме инҫе. Никандр пӗр шухӑш пачӗ мана. Вӑл киле таврӑннӑ чух курнӑ: Мускав таврашӗнчи колхозсем вӗллесене хире, клевер уйне кӑларса лартаҫҫӗ, тет.

Василий Иванч. Аван шухӑш. (*Ҫырнӑ хутне Маврана тыттарать*). Акӑ сана хут, Мавра Васильевна. (*Мирон Михалча*). Вара, вара?

Мирон Михалч. Пирӗн те ҫапла тумалла

мар-ши? Ирех, хуртсем хусканиччен, вӗллесене машина ҫине тиес те илсе тухас клевер пуссине. Хуртсем вара, вӗллерен тухсанах, чечексем ҫине ларса пыл пухӗҫҫӗ

Василий Иванч. Аван пулать. Пит аван. Кала Никандра, ыран иртерех пырса, хулана кайиччен пулӑшса хӑвартӑр. А малашне, вӗллесем турттарма, вӑрӑм урапапа пӗр вӑкар парӑпӑр сана. Хавах пӗлетӗн, машина валли урӑх ӗҫ те нумай.

Василий Захарчпа Мышкин васкаса кӗреҫҫӗ.

Мышкин. Инкек, Василь Иванч!

Пурте. Мӗн пулнӑ?

Василий Захарч. Акӑ, ирсӗрсем!.. (*Чӗркесе тытнӑ хута сӗтел ҫине хурса саркалать*). Эпир вӗсене паян-ыран пӗтерсе тӑкмасан, вӗсем пирӗн пӗтӗм сахӑр кӑшманне ҫисе яраҫҫӗ.

Василий Иванч (*вӗчӗрхенсе*). Пит нумай-им?

Василий Захарч. Вӑйлӑн кӗшӗлтетеҫҫӗ, ҫӗр ҫӑтасшӑсем!

Василий Иванч. Табак тусанӗ пулӑшмарӗ эппин?

Мышкин. Ӑна сапсанах ҫумӑр ҫурӗ; ҫавӑ юрамарӗ пулмалла.

Мирон Михалч. Аҫтан килсе ӗрченӗ-ха вӗсем?

Василий Захарч. Утар таврашӗнчен тухнӑ пулмалла: унта ҫумкурӑкӗсем нумай.

Мавра. Утар тавра шӗнчен?

Василий Иванч. Пулма пултарать.

Тамара. Герасим Лукич, кил-ха.. (*Мышкин ун патне пырать, Тамара ӑна пӑшӑлтатса тем калать*).

Мирон Михалч. Пӗлнӗ пулсан—ҫава тытса веҫех ҫулса тухаттӑм. Усчӗр, ҫилос тума юрӗҫ, терӗм. Ак сана, сӑтӑр туса хутӑм пулать! Мӗнле пӗтерес халь кусене? (*Сӗтел ҫинчи хурт-кӑпшанкӑсене пӳрнипе тӗксе кӑтартать*).

Мавра. Пар-ха... (*Хут ҫинчи хурт кӑпшанкӑсене чӗркесе тытать те хӑвӑрт тухса каять*).

Василий Захарч. Мӗнле-ха ҫав имҫамне илсе килеймен хуларан?

Василий Иванч. Переучӗт тӑваҫҫӗ тет-и? Тупнӑ вӑхӑт! (*Хайӗн пӳлӗмне кӗрсе каять, алӑкӗ уҫах юлать*).

Мирон Михалч. Утар патӗнчен тухнӑ, а? Кам пӗлнӗ-ха, кам пӗлнӗ! Ҫынпа канашламасӑр ан та ту ҫав пӗлмен ӗҫе.

Мышкин Тамарӑпа ҫуммӑн ларать. Хутсене иккӗш пӗрле ҫавӑркалама пуҫлаҫҫӗ.

Василий Иванч (*кабинетран*). Алло! „Мологов“ колхозне парӑр-ха.

Василий Захарч. Праскисем, йӑран купалама пӑрахсах, алӑпа иртсе пӗтерме пикен-

чĕç те, ăçтан çăваран пĕтерен вĕсене, —пĕр йăран çинче мар вĕт, виçĕ гектар çинче!

Мирон Михалч. Пĕтĕмпех сарăлнă-и?

Василий Иванч (*телефонпа калаçни илтĕнет*). Алло! „Молотов" колхозĕ-и? Кам ку? Михеев? Иванов калаçать. Ăхă. Итле-ха, тусăм, пулăш-ха тархасшăн,—инкек сиксе тухрĕ пирĕн: сахăр кăшманне хурт-кăпшанкăсем пĕтереççĕ. Леш кремнефтористый натр çук-и сан? Илме ятăм? Эпĕ те янăччĕ те çав, илеймесĕр таврăнчĕç... Склад хупă пулнă.

Мышкин. Эп кайнă пулсан, çавна илсе килеймесгĕм-и?

Мирон Михалч. Чĕлхепе эпир темĕн те тăватпăр.

Василий Захарч. Мĕнчул ĕçлени, мĕнчухлĕ тар тăкни сая каять! Гектартан икĕ пин пăт'туса илме сăмах панă вĕт вăл!

Тултан Мавра васкаса кĕрет, кабинетран Василий Иванч тухать.

Мавра (*хĕпĕртесе*). Çиеççĕ! Чăхсем çиеççĕ хуртсене!

Василий Захарч. Ну, çиеççĕ. Вара мĕн?

Мавра. Вара—акă мĕн! Фермăра пилĕкçĕр чăх. Автомашин çине лартас та вĕсене, кăларса ярас сахăр кăшманĕ çине. Часах çисе пĕтереççĕ!

Мышкин. Вăт пассажирсем тупнă! Автобус пулсан—татахчĕ хăть. Грузовик çинче чăхсем ларса пыраççĕ-и?!

Василий Иванч (*Мышкина*). Тăхта эс. Тума пĕлсен—грузовикран та автобус пулать. Шăналăксем мĕншĕн? (*Маврана.*) Ыталаса чуп тăвас пулать сана куншăн, Мавра Васильевна!

Мавра. Ытла та эс!.. Хам шухăшласа кăларман, журналта вуланине аса илтĕм.

Улюна килсе кĕрет.

Василий Захарч. Мĕншĕн ман карчăк çавăн пек мар-ши?!

Улюна. Мĕнле пулмалла эп саншăн?

Василий Захарч. Ак, Мавра тăхлачă пек.

Улюна. Çавăнпа, киле таврăнмасăр, ун куçĕнчен пăхса тăратăн-и?

Мирон Михалч. Шўт туса калать вăл; ан çилен эс, Улюна тăхлачă. Каяр, амăш. Сăмах патăмăр пулсан, ĕçне тăвас пулать. (*Каяççĕ*).

Улюна (*Мирон Михалч хыççăн*). Хура юр çусан, „тăхлачă“ пулăпăр.

Василий Иванч. А шурă юр çусан, мĕншĕн тăхлачă пулас мар? Кĕр мăнтăрĕпе шăпах туй тума аван.

-Улюна. Аван пулсан, эсир туй тăвăр.

Василий Иванч. Тăватпăр çав. Курăн акă, Праски туйне пĕтĕм колхозĕпех тăватпăр.

Улюна (*Василий Захарча*). Атя. Юмах итлеме кайран килĕпĕр. Халь вăхăт çук—купăстасене шăварма шыв кўрсе хурас пулать. (*Стариккине алăк патнелле çаватса каять*).

Василий Иванч. Тăхтăр-ха. (*Лешсем чарăнаççĕ*). Улюна инке, эпĕ сана Василь Захарч

умĕнчех çакна каласшăн: пăрах эсĕ çынсемпе ятлаçса çÿреме!

Улюна (*упăшки çине пăхса*). Ак сана!..

Василий Захарч. Итле, итле! Атту, хăв çеç калаçма юрататăн.

Василий Иванч. Эс, Улюна инке, хăвăн старикккÿпе чипер хĕрне çеç мар, пĕтĕм колхоза намăслантаратăн. Пĕркун эс кÿршĕсемпе харкашнă хыпар „Молотов" колхозне те çитнĕ вĕт! Михеева тĕл пулнăм та, кулать: Мĕнле унта сирĕн, çерçи çăмартисене уйăрмаççи-ха?—тет. Сана пула намăсланса çĕр тĕпнех анса каяттăм.

Улюна. Санпа мар, хам кÿршĕсемпе ятлаçнă. Сирĕн ĕç те çук. (*Старикикине*). Атя, ут!.. Вĕрентекенсем нумай пулĕç. (*Тухса каять*).

Василий Захарч (*аллисене саркаласа*). Мĕн тăвас тен унпа, нимĕн тума та çук. (*Тухса каять*).

Тамара. Агитаторсем çÿремеççĕ ун патне. Праски çине шаннă та.

Мышкин. Агитатор мар, ун пек чăлаха çăва шăтăкĕ çеç тÿрлетме пултарать.

Василий Иванч. Чăлах тетĕн? Хамăр мĕнле пулнă-ши ĕлĕк? Пĕтĕм ял мĕнле пулнă? Çамрăк-ха эс, ваттисем çинчен ун пек калаçма. Çăва мар, пурнăç тÿрлетет пирĕн çынсене. Пурнăç çинчен, ĕç çинчен ытларах калаçас пулать. Çапла вĕт?

Мышкин. Так точно, Василий Иванч.

Василий Иванч. Тотă çав.

ЧАРШАВ

## *ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ*

Шыв хĕрринчи вата йăмрасем хушшинче çĕнĕ электростанци лараты. Маларахра тыса пĕтереймен трибуна тăрать. Кĕрхи кас пуçланнă вăхăт. Чаршав уçăлнă чухне **Василий Захарч** трибуна хыçĕнче мăлатукпа шаккаса ĕçлени курăнать. Аякра çамрăксем юрлаççĕ.

Хитре хĕрсем юрланă чух,
Маттур яшсем ташланă чух,
Чун савăнать, чĕре сикет,
Татах та маттур пулас килет.

**Василий Захарч** (*трибуна хыçĕнчен тухать*). Юрлама та пуçларĕç. Çамрăксем вĕт, мĕн тăвăн! Ĕлĕк, ку вăхăтра, хĕр-упраçсем хура мунчасенче, „чĕп-куç" çуттипе улах ларатчĕç. Халь вĕсем—клуба чупаççĕ. (*Аякри сасăсемпе пĕрле хуллен юрласа ĕçлет*).

Тăван çĕршыв, тăван çĕршыв,—
Асран кайми юратнă çĕршыв...

**Мавра** апат йăтса кĕрет.

**Мавра**. Вăй патăр, Василь Захарч!

**Василий Захарч**. Тавах, Мавра тăхлачă.

**Мавра**. Пĕчченех тăрмăшатăн-çке эсĕ?

**Василий Захарч**. Çамрăксем пурччĕ те, хамах клуба хăваласа ятăм. Чаплă лару хыççăн спектакль кăтартас теççĕ. Кайса хатĕрленĕрех, терĕм.

**Мавра**. Кĕтрĕм-кĕтрĕм хамăн арçынсене—кĕтсе илеймерĕм. Иртенпе çимен паян.

Василий Захарч. Ун вырăнне ыран, ак, ĕçкине те, çикине те куç туллиех курăпăр.

Мавра. Уяв вăйлă пулать ĕнтĕ ыран. Виçĕ така, хĕрĕх автан пусрĕç, хĕрĕх витре сăра тунă...

Василий Захарч Сăри пит лайăх, хăмлине те, пылне те хĕрхенмен.

Мавра. Хамăр тунă, сутăн илмен.

Василий Захарч. Юри чĕнсе кайрĕç мана. „Ĕçсе пăх-ха, Василь Захарч, эс пахалăх инспекторĕ", теççĕ. Кун пек эпĕ—тата вăтăр çул пахалăх инспекторĕ пулса пурăнма хатĕр.

Мавра. Нумай пурăнасшăн эс.

Василий Захарч. Ма пурăнас мар? Революциччен эп вăтăр çула çитнĕччĕ. Совет влаçĕ пулсан акă татах вăтăр çул пурăнтăм. Хама пĕрре те ватăлнă пек туйăнмасть-ха, çамрăклансах пынă пек. Ырлăх çитнĕ чух, тепĕр вăтăр çул пурăнатăпах.

Мавра. Тем пекех пурăнасчĕ те...

Василий Захарч. Пурăнатпăр! Тĕтĕмкраççин шăрши пулмасть малашне пирĕн пӳртсенче. Яшка-çăкăра та лектрицăпа пĕçерме пуçлатпăр ак: пуçа сĕрĕм тивес çук вара ун чух. Мунчи мĕнле-ши ун, лектрицăн? Чулĕ мерчен, ăшши—шерпет, тесе çавна каламаççĕ-ши?

Мавра. Шухăшласа кăларăн эсĕ, темĕн те. (*Кайма тăрать те, Василий Захарч сăмаха малалла тăснăран, татах чарăнать*).

Василий Захарч. Шухăшласа кăлармаллисем пит нумай пирĕн. Сăмахран, пилĕк çул-

лăх план тăрăх, колхоз мунчи тума пăлăртнă. Василь Иванч калать: вĕри шыва та, сивĕ шыва та, хулари пек, крансран юхмалла тăватпăр, тет.

Мавра. Вăл калани яланах пулса пыраканччĕ те-ха... Ку çуттине кĕçĕр—те параççĕ ĕнтĕ, те çук?

Василий Захарч. Атя, кĕрсе курар, мĕнле унта... (*Кĕрсе каяççĕ*).

Мышкинпа Тамара кĕреççĕ.

Тамара. Эппин, урăх кассир тупса памарĕç сана?

Мышкин. Эп пĕччен те пит аван ĕлкĕрсе пыратăп. Ма ытлашши ĕçкунĕ пĕтерес?

Тамара. Чăнах, эп ахалех ĕçкунĕ илсе пурăннă.

Мышкин. Эс мар, кивĕ председатель айăплă пулнă уншăн, çав темĕн пысăкăш штат туса тултарнă. Акă халь Василь Иванч пĕтĕмпех йĕркене кĕртсе çитерчĕ.

Тамара. Эсĕ те Василь Иванча мухтама пуçланă-çке?

Мышкин. Ĕçĕсем мухтаттараççĕ. Акă, сăмахран, электростанцинех илер. Мĕн чухлĕ тăрăшрĕ вăл уншăн! Эс вĕренме кайнă чух юписене çеç лартнăччĕ; халь, ав, пĕлĕте çити çĕкленсе ларать! Кĕçех ак йăлкăшса çиçме пуçлать. Ларар çакăнта. (*Трибуна пусми çине ларать*).

Тамара. Таса мар пуль кунта?

Мышкин. Тап-таса!

Тамара. Ай!.. Алла шăрпăк кĕчĕ.

Мышкин (*ун аллине тытса*). Аллу пит çемçе-çке санăн!

Тамара (*аллине туртса илет*). Иртнĕ çулла хытă лектернĕччĕ пулас? Мантăн-им?

Мышкин (*çапасран сыхланса*). Астăватăп, астăватăп!

Тамара. Асту çав. (*Ларать*). Никандр та халь электростанцинче ĕçлет темеççĕ-и?

Мышкин. Пур çĕрте те пултарать вăл.

Тамара. А шофер кам халь?

Мышкин. Иван куккасен Маркелĕ.

Тамара. Апла эппин, Праскипе мĕнле вĕсем?

Мышкин. Эс çаплах интересленетĕн пулас унпа?

Тамара. А эс çаплах кĕвĕçетĕн?

Мышкин (*шўт туса*). Кĕвĕçетĕп! Отелло пек!

Тамара. Асту-ха эс ăна, мĕн пĕлет вăл! (*Кулса*). Вырăсливе вуларăн-и, е акăлчанлах?

Мышкин. Чăвашли те япăх мар. Мĕн эс пире нимĕн те вуламаççĕ тетĕн-им? Пĕлетĕн-и?.. (*Сиксе тăрать*). Ыран эп çак трибуна çинчен сăмах тухса калатăп!

Тамара (*кулса*). Ытлашши ан вĕç-ха, тар-хасшăн, юратса пăрахăп таçта.

Мышкин. Эх, Тамара!.. Мĕн чухлĕ вăй халь ман, мĕн чухлĕ вĕри туйăм! (*Ыталасшăн*).

Тамара. Кай, çынсем килеççĕ, ав. (*Тамара*

*вĕçерĕнсе чупса каять, Мышкин ун хыççăн чупать).*

Улюна кĕрет.

Улюна. Хăратса ятăм путекпе такана... (*Чарăнса пăхкаласа тăрать.*) Ытла та шăп-çке кунта? Кайса пĕтнĕ пулмалла. Кĕçĕр çутă пулать тесе ахаль кĕрлерĕç пулмалла.

Электростанцинчен витре йăтса Никандр тухать.

Никандр (*Улюнан юлашки сăмахĕсене илтсе*). Ахаль мар, Улюна инке, çутă пулатех кĕçĕр.

Улюна. Э-эй, ара, кайса пĕтмен-çке?

Никандр. Çутă памасăр кайма юрать-и!

Улюна. Çынсем, ав, выляма тухнă. (*Мышкинпа Тамара кайнă еннелле пуçне сулса кăтартать*). Эс мĕн, витресем йăтса çӳретĕн?

Никандр. Ман хĕрача урама тухмасть çав, Улюна инке; анне вăрçать, тет.

Улюна. Ан чар-ха сире? Чармасан, шыва та сикĕр эсир. (*Кайма тăрать*).

Никандр. Улюна инке!.. (*Леш чарăнать.*) Ман санпа калаçас килет те...

Улюна. Калаçрăмăр вĕт-ха?

Никандр. Çук... Урăххи çинчен.

Улюна. Мĕн тата вăл?

Никандр. Анчах эс ан çилен.

Улюна. Кала, ара.

Никандр. Эс, темле, сиввĕн пăхнă пек ман çине, Улюна инке? Тĕл пуласран юри пăрăнса çӳренĕ пек туйăнать. Мĕншĕн çапла-ши?

Улюна. Ха, ма çапла... А мана эс ху

ăçу-аннў хыççăн кайса, ман çине сиввĕн пăхнă пек туйăнать.

Никандр. Атте-анне хыççăн? Ăнланмастăп. Ман атте-анне нихçан та сана хирĕç хĕтĕртмен мана. Сăлтавĕ те çук.

Улюна. Эппин... манăн та сан çине сиввĕн пăхма сăлтавăм çук-çке.

Никандр. Чăнах-и? Ну, тавтапуç апла пулсан. Эп вĕт-ха, мĕн тесе...

Улюна. Мĕн тесе?

Никандр. Эп урăхла шутланăччĕ...

Улюна. Мĕн шутлама пултарнă эс ман çинчен?

Никандр. Çук, сан çинчен мар, сан умăнта хама айăплă, тесе шутланă.

Улюна. Мĕнле усал тунă эс мана?

Никандр. Нимех те туман та... Ара, эп— таврăнтăм, Ваçук таврăнаймарĕ. Çавăнпа хама-хам айăплă пек шутлатăп сан умăнта.

Улюна (*кăмăлĕ хуçăлчĕ*). Ун пек ан шутла, ачам... Ваçукăн хайĕн телейĕ çапла пулнă пуль. (*Куçĕсене шăлать*). Хамăрăн телейĕ çапла пуль...

Никандр. Вăт... ахалех кулянтартăм сана...

Улюна. Нимех те мар... (*Тухса каять*).

Никандр. Шел карчăка. Анчах, каламасăр тўсеймерĕм. Хăть—тинех чун лăпланчĕ халь... (*Витрипе чăнкăртаттарса шыв хĕрринелле кайса сухалать*).

Электростанцинчен Маврапа Василий Захарч тухаççĕ.

Мавра (*Василий Захарча*). Василь Захарч, çисе яр çак çӑмартана!

Василий Захарч (*сава тытса тухнӑскер, трибуна пусмине савалать*). Тавтапуç, Мавра тӑхлачӑ... Сӑрлас пулать-ха ку трибунӑна...

Мавра (*ун патне пырса*). Василь Захарч, иксӗмӗр кӑна чух, ыйтам-ха санран...

Василий Захарч. Вӑрттӑн сӑмах-им?

Мавра. Вӑрттӑн çав. Мӗн-и, Улюна çаплах çиленет-и пире?

Василий Захарч (*шӳт туса*). Çиленет. Эс орден илесрен сехри хӑпса тухнӑ-ха ун. „Мавран виççӗр ытла ӗçкунӗ пулнӑ, ман—çӗр çирӗм кӑна", тет. Хӑй колхозра маларах тӑрӑшса ӗçлеменшӗн ӳкӗнет.

Мавра. Уншӑн анчах пулсан—çилентӗрех. Çуллахишӗн мӗнле?

Василий Захарч. Тав тӑвать сана, Праские инкекрен хӑтарчӗ, тет...

Никандр шыв хӗррипчен шыв ӑсса хӑпарать те электростанцине кӗрсе каять.

Мавра. Суян пуль?.. Эп ун пирки мар та-ха...

Василий Захарч. Чӑн мар-им, ара? Ахаль пулсан, ӑçтан-ха çичӗ пин пӑт сахӑр кӑшманӗ туса илес? Хуртсем çисех яратчӗç...

Мавра. Эп ун пирки мар, ылханлӑ çӑмарта пирки...

Василий Захарч. Маннӑ вӑл ун çинчен, шарламасть.

Мавра. Тем пекехчӗ! Ара, ма хирӗҫсе пуранас-ха пирӗн?

Василий Захарч. Эпӗ те ҫавнах калатăп, Мавра тăхлачă.

Мавра. Пӗр шухăш пур та пирӗн, Василь Захарч...

Василий Захарч. Пулсан, каласа пăх, тен пӗрле канашлăпăр.

Мавра. „Тына шырама" пырас тетпӗр те сирӗн пата... Эсир тепле? Пӗлмесӗр пырас—аван мар.

Василий Захарч. Эпир-и?.. Ман шухăша—Мирон Михалч пӗлет-ха. Эп таканари шыв пек вылянма юратмастăп. Суклаҫ,—терӗм пӗрре, халӗ те ҫавнах калатăп.

Мавра. Тавтапуҫ, Василь Захарч. Карчăку мӗнле. Вăл мӗн калӗ-ши?

Василий Захарч. Мӗн калӗ? Караҫ ҫинчен калаҫкалатчӗ те вăл, анчах эпир калаҫнинчен килет-им? Халь ӗлӗкхи мар, ҫамрăксен хăйсен ирӗк.

Мавра. Ҫамрăкӗсем... килӗштерешҫӗ те-ха пирӗн...

Василий Захарч. Ăна хам та сисеп-ха.

Мавра. Пӗр ҫемье пек, ӗмӗр килӗштерсе пурăнăттăмăр.

Василий Захарч. Ара, илемлӗ пурăннине мӗн ҫитет?

Улюна сасси. Кунтахчӗ тетӗн-и? Килсе пăхрăм та—курмарăм-ҫке?

Василий Захарч. Ку—ман карчăк сасси-çке?

Мавра. Çавă. Каям-ха эп... Тавах сана, савăнтартăн.

Мавра кайма тăрать. Ăна хирĕç Улюна килсе кĕрет. Василий Захарч çĕре чĕркуçленсе ларса трибунăн аялти пусмине савалать.

Улюна. Кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе те çутă параймаççĕ. Пулмасть пуль вăл пирĕн колхозран?

Мавра. Вучах чĕртесси пек çеç мар пуль çав вăл, лектростанцине хута ярасси.

Улюна (*Маврана*). Эс пĕлетĕн пуль ара, журналсем вулакансем?

Мавра. Ун йышшинех вулаймастпăр çав.

Улюна. Çырман хута çеç вулама ăста çав эпир. Çавах мухтанатпăр.

Василий Захарч. Карчăк!..

Улюна (*старикки патне пырса*). Эс мĕн, çĕрте упаленетĕн? Киремете пуççапатăн-им?

Мавра ассăн сывласа илет те тухса каять.

Василий Захарч. Киремете—аçа-çаптăр. Эп—пăта çапап. (*Мăлатукпа çапать*).

Улюна. Чĕлхи çавăн!.. Çылăха кĕни çеç санпа калаçса.

Василий Захарч. Çылăха кĕрсен, эрешмен вĕлерсе каçарттарăн-ха. Çапла тăватăн вĕт эсĕ?

Улюна. Суйлан, ытларах. Атя киле! Сана пула, Праски апат çимесĕр ларать.

Василий Захарч. Лармалла та çимелеччĕ. Ман валли кунта илсе килмеллеччĕ.

Улюна. Çыхса лартнă-им сана кунта? Кил тĕлне пĕлетĕн.

Василий Захарч. Çыхăнтăм-ха, хурала кĕтĕм.

Улюна. Кам йăтса каять ăна?

Василий Захарч. Э-э, карчăк, сан хура мунчу мар вĕт ку, колхоз электростанцийĕ!

Улюна. Миçе ĕçкунĕ параççĕ?

Василий Захарч. Ун çинчен калаçман-ха.

Улюна. Ватăличчен пурăнса та ăса кĕрейместĕн. Малтан калаçса татăлмасăр, кам ĕçе кĕрĕшет?

Василий Захарч. Кулак патĕнче мар,— хамăр колхозра.

Улюна. Эс хăвăннех юрлатăн. Кÿршĕсем ав, миçе ĕçкунĕ турĕç кăçал?

Василий Захарч. Кÿршĕсемпе мĕн калаçма! Вĕсен карчăкĕ те, ав, хăйĕн арçынĕсене паçăрах апат илсе килсе çитерчĕ.

Улюна. Вĕсем мĕн ĕçлеççĕ кунта?

Василий Захарч. Мирон Михалч кăмака тăвать, Никандр техникпа пĕрле ĕçлет... Эх, карчăк, аван мар пурăнатпăр эпир вĕсемпе.

Улюна. Мĕн тăвас-ха?

Василий Захарч. Манас пулать киввисене. Пĕлес пулсан,—тав тумалла эпир кÿршĕсене. Мĕн чухлĕ пулăшрĕç вĕсем пирĕн Праски бригадине! Никандрĕ те, амăшĕ те... Каласан—

ҫиленетӗн те, анчах эс ху та Маврана пӑхсах ӗҫе тухма пуҫларӑн. А усси хамӑрах пулчӗ. Мӗн чухлӗ тырӑ илтӗмӗр кӑҫал!

Улюна. Юрӗ-ҫке, ӑна хам та пӗлетӗп. Кала-ха эс мана: апатпа килсен, нимӗн те калаҫмарӗ-и вӑл санпа?

Василий Захарч. Кам, Мавра-и? Епле калаҫмарӗ пулать? Калаҫрӗ, ҫӑмарта ҫиме сӗнчӗ.

Улюна. Тӑрӑхлать эппин, мур илесшӗ!

Василий Захарч. Ҫук, тӑрӑхласа мар, ырӑ кӑмӑлпах сӗнчӗ.

Улюна. Апла-ши? Тен, ҫуллахине халь те манмасть? Шуйттан чӑххи! Таҫтан килсе тухрӗ ун чух ман куҫ тӗлне! Тамари тата хӗтӗртсе пуҫа ҫавӑрчӗ.

Василий Захарч. Пусас ӑна.

Улюна. Кама?

Василий Захарч. Чӑпар чӑхха. Пусас та, хӑнасем пына ҫӗре пӑтӑ пӗҫерес.

Улюна. Мӗнле хӑнасем?

Василий Захарч. Кӳршӗсем „тына" шырама пырас теҫҫӗ.

Улюна (*хӗпӗртесе, анчах юри пӗлмӗш пулса*). Мӗнле тына шырама?

Василий Захарч. Пӗлмӗш пулать тата. Ну, эппин, хӗр ҫураҫма.

Улюна. Кай, ан тӗлӗнтер!

Василий Захарч. Курӑн акӑ.

Улюна. Ара, мӗнле-ха капла, сасартӑках? Хӑв юри шутласа кӑларнӑ пуль эс?

Василий Захарч. Эп ун ҫинчен тахҫавах шутланă та-ха, эс ҫаплах тупа „тунă“, тесе йăлăнтартăн.

Улюна. Ара, ĕне вилнĕшĕн вĕсем айăплă мар пулсан, турă каҫартăр ĕнтĕ.

Василий Захарч. Хăвах шутла: хăҫан сынна усал тунă вĕсем? Кӳршĕсем пирĕншĕн мĕнле ырă ĕҫ тунине пĕтĕм колхоз пĕлет.

Улюна. Ҫураҫма пырас пирки хăшĕ калаҫрĕ? Старикки-и, е хăй-и?

Василий Захарч. Ҫук, амăшĕ.

Улюна. Ҫавă-и, теп ҫав. Ăшшăнрах калаҫма пĕлмерĕм унпа...

Василий Захарч. Ӳлĕм ăшă кăмăллăрах пулма тăрăш ĕнтĕ, карчăк.

Улюна. Эппин... мĕн эппин... Асту-ха эс!.. Ара, мĕн ĕнтĕ... Никандрĕ кăмăла каять ҫав. Ахаль пулсан, питех вĕсен куҫĕнчен пăхса тăман пулăттăм та...

Василий Захарч. Эс пăхмăттăн та, пирĕн „тыни“ вĕсен еннелле пăхать.

Улюна. Телейĕсем пулччăрах. Мĕн-и, ҫураҫма ыранах пырĕҫ-ши вара?

Василий Захарч. Туйне Октябрь праҫникĕнче тăвас, теҫҫĕ.

Улюна. Ара ҫав. Ĕҫке хутшăнакансем те ытларах пулĕҫ.

Василий Захарч. Ун пирки ан пăшăрхан: ĕҫкĕрен кам тарать? Каларĕ вĕт Василий Иванч: Праски туйне пĕтĕм колхозĕпех тăватпăр, терĕ.

Улюна. Тăвĕҫ те ҫав, тăвĕҫ те. Вĕсем ка-

ланинчен иртме çук, ялан вĕсем калавă пĕк пулса пырать.

Василий Захарч. Пире кирлĕ пек, парти хушнă пек туса пыраççĕ вĕсем, çавăнпа вĕсен сăмахĕ çиле каймасть. Ăнлантăн-и?

Улюна. Ăнлантăм-çке, çав териех ухмах мар-çке.

Василий Захарч. Эппин, тавах турра!

Улюна. Мĕн-и, эс кунта хурал тăрасах тетĕн-и кĕçĕр?

Василий Захарч. Епле-ха унсăр? Паллах, тăратăп. Уяв тесе, ĕçе манма юрамасть.

Улюна. Апат çиме те пыраймастăн-и?

Василий Захарч. Кунта илсе килсен, авантарах пулĕччĕ.

Улюна. Эппин, кайса Праские апатпа яратăп эпĕ?

Василий Захарч. Яр çав. (*Кайма тăнă Улюнана*). Тăхта-ха, карчăк. (*Улюна каялла ун патне пырать.*) Савăнтартăн эс мана, карчăк. (*Улюнана çурăмĕнчен лăпкать.*) Каях, ĕнтĕ, каях.

Улюна. Ах, старик... (*Куçĕсене шăлса.*) Макăртрăн эс мана... (*Тухса каять*).

Василий Захарч. Кăмăлĕ çаврăнчĕ карчăкăн. (*Юрлать*).

Лутраях та шĕшкĕ, сарă мăйăр...

Мышкин кĕрет.

Мышкин. Эс, Ваçак пичче, ху пахалăх инспекторĕ,—анчах та хăвах, савалама ўркенсе,

хӗрсен аллине шӑрпӑк кӗртетӗн. Пӑх-ха, ӗҫ пулать-и ҫак?.. (*Трибуна пусмине хыпаласа кӑтартать*). Ак, чудеса! Яка-ҫке? Паҫӑр саваламанччӗ.

Василий Захарч. Сирӗн хыҫҫӑн саваласа тӑкрӑм. Хӗрпе лармалли вырӑн-им ку? Ыран кунтан Октябрь революцийӗ 30 ҫул тултарни ҫинчен сӑмах тухса калаҫҫӗ.

Мышкин (*сӑмаха урӑх енне пӑрса*). Мӗнле, Ваҫак пичче, ҫутӑ пулать-и кӗҫӗр, ҫук-и? Клуба халӑх пухӑнма пуҫларӗ.

Василий Захарч. Пулать. Василь Иванч хӑй те иртенпех кунта паян.

Мышкин. Тен, пулӑшакан ҫын кирлӗ унта вӗсене?

Василий Захарч. Санпа эпир пӗлмен ӗҫ кӑна юлнӑ унта.

Мышкин. Пӑхма пит илемлӗ пулчӗ те, ӗҫлессе мӗнле ӗҫлӗ-ши?

Василий Захарч. Пӗтӗм халӑхпа тунӑ япала—начарах ӗҫлес ҫук.

Электростанцичен Василий Иванч тухать.

Василий Иванч. Станци лайӑх ӗҫлетӗр тесен, хамӑрӑн нумай ӗҫлес пулать-ха.

Мышкин. Мӗн ӗҫлесе пӗтмен тата?

Василий Иванч. Пӗвене ҫуркунне шыв татса каймалла мар тӑвас пулать.

Василий Захарч. Ун пек тусан, пит аван пулмалла та,—ҫурхи шыва ӑҫтан тытса чаран?

Василий Иванч. Ял хыҫӗнчи кукӑртан Тип-Ҫырмана ҫитиччен канал алтса тухас пулать. Шывӑн кивӗ ҫулӗ ҫавӑнта пулнӑ, тет, ӗлӗк. Тӗрӗс-и, Василь Захарч?

Василий Захарч. Ҫапла каласатчӗҫ ваттисем.

Мышкин. Унта икҫӗр метр ытла та, хӑҫан алтса пӗтермелле ӑна? Халь—ҫӗр те шӑннӑ.

Василий Иванч. Икҫӗр метр алтасси—Беломор канал алтасси мар. Ҫӗр ҫиелтен ҫеҫ шӑннӑ халь.

Праски кӗрет. Пӗр аллинче тумтир, тепӗр аллинче апат ҫыххи.

Мышкин. Беломор канала государство тутарнӑ, колхозниксем алтман.

Василий Иванч. Узбекистанри колхозниксем мӗнле пысӑк канал алтнӑччӗ ҫак, Прасковья Васильевна?

Праски. Ферганськи канал. (*Йӑмра айӗнчи сак ҫине апатне тата аллинчи тумтирне хурса*). Атте, кил, ларса ҫи, анне апат парса ячӗ ак; кӗрӗк те илсе килтӗм; ҫӗрле сивӗ пулӗ.

Василий Захарч. Юрӗ, хӗрӗм. (*Малтанхи каласӑва тӑсса*). Каналне алтас тесен, вӑхӑчӗ пур-ха вӑл, колхозниксем те пушӑ халь. (*Симе ларать*).

Праски. Мӗнле канал?

Мышкин. Василь Иванч пирӗн! Пӗр ӗҫ хыҫҫӑн теприне тупсах тӑрать. Халӑха пӗрре те кантарасшӑн мар. Кӑҫал ахаль те нумай ӗҫлерӗ ӗнтӗ.

Василий Иванч (*иронипе*). Эпир канса ларар, ытти колхозсем малалла кайччăр. Ун выранне, пирĕн колхозăн ячĕ „Малалла", вăл та ҫитет. Ҫапла-и? Ҫук, шăллăм, ун пек ĕҫ тухмĕ! Туна ҫитĕнӳсемпе лăпланса ларма пултараймастпăр эпир. „Малалла" тăк—малалла!

Мышкин. Ман шутпа, кукăртан Тип-Ҫырмана ҫити канал чавассинчен, ҫуркунне татса кайнă пĕвене пĕвелесси темиҫе хут ансатрах.

Праски. Ав мĕн ҫинчен калаҫатăр эсир! Унта канал алтас пирки эп мĕн чухлĕ шухăшламан пуль?! (*Мышкина*). Пĕлетни, мĕн тума пулать ун чух? Пĕтĕм сăрт тăрăх сад лартса тухма пулать. Вунă гектар та пулĕ унта. Шăпах хĕвеле хирĕҫ тата.

Василий Захарч. Шырланкă хыҫне тепĕр пĕве тусан, пулă ĕрчетме те аван пулать.

Василий Иванч (*Мышкина*). Илтетĕн-и, ҫынсем мĕн ҫинчен шухăшлаҫҫĕ?

Мышкин. Фантази ҫеҫ-ха вăл.

Праски (*электростанцине кăтартса*). Ак ҫакă та фантазиччĕ. Халь ав... (*Сасартăк пĕтĕм тавралăх кăнтăрлахи пек ҫуталса каять. Праски хавассăн кăшкăрса ярать*). Куратăн-и! Пирĕн фантазисем мĕнле пурнăҫа кĕрсе пыраҫҫĕ!

Хавасла сасăсем илтĕнеҫҫĕ:

—Ҫутă! Ҫутă! Пĕтĕм ял ҫап-ҫутă!

Василий Захарч. Хисеп—ĕҫренне ҫынсене!

Василий Иванч (*трибуна ҫине хăпарса хавассăн йĕри-тавра пăхса тăрать*). Ава-ан!.. Герасим Лукич, чуп, Михеев патне шăнкăртаттар хăвăртрах: ҫутă кирлĕ мар-и вĕсене?

Мышкин. Есть! (*Чупса тухса каять*).

Василий Иванч (*ун хыҫҫăн*). Шўт тăватăп эпĕ.

Мышкин (*сцена хыҫĕнчен*). Пурпĕрех! . Антив, уя тухса курччĕр: кам колхозĕ ҫутăрах!

Праски. Ну, халь клуба кайма та юрать, Василь Иванч.

Василий Иванч (*трибуна ҫинчен анса*). Тăхта, Прасковья Васильевна, электростанцине тăвакансене кĕрсе тав тăвар-ха. Василь Захарч, эсĕ те пит нумай вăй хутăн, сана чи малтан пĕтĕм колхоз ячĕпе тав тăватăп! (*Алă парать, унпан ыталаса чуптăвать*).

Василий Захарч (*куҫне шăлса*). Эс мĕн?.. Эп—ушкăнпа пĕрле, халăхпа. Пĕччен эп—ав, ҫав ҫĕрти турпас ҫеҫ.

Василий Иванч. Турпас мар, Василий Захарч, хисеплĕ ҫын!

Василий Захарч. Василь Иванч!.. Эп мĕн... хурал тăрас тетĕп те кĕҫĕр кунта... апла-капларан шанчăклă пулĕ.

Василий Иванч. Мĕн эс, Василь Захарч? Нимле хурал та кирлĕ мар.

Праски (*ашшĕне ыталаса*). Атте, эс ху ирĕкўпех-им? Эп сана Василь Иванч хушнă пуль тесе.

Василий Захарч. Халӑх тарӗпе пулнӑ-ҫке-ха... Халӑх пурлӑхне сыхлани кирлех ӗнтӗ...

Василий Иванч. Юрӗ эппин, Василь Захарч, клубран халӑх салансан, килсе ларӑн. Анчах ку ӗҫ пирки колхозниксемпе калаҫса татӑлас пулать...

Электростанцинчен, вӗсене хирӗҫ, Никандр тухать. Вӑл ывӑннӑ, анчах Праские курсан, сасартӑк хавасланса каять.

Никандр (*хавассӑн*). Хута кайрӗ, Василий Иванч!

Василий Иванч. Маттур, Никандр Миронч. Тав тӑватпӑр сана. (*Алӑ парать*).

Василий Захарч (*алӑ парса*). Ӗҫ ӑстаран хӑрать, теҫҫӗ.

Василий Иванч. Техник мӗнле?

Никандр. Юрлать. Ҫавна кӗрсе тав тӑвӑр эсир; эпӗ—мӗн?.. Эп ун ҫумӗнче ӗҫлекенӗ ҫеҫ...

Василий Иванч Никандрпа Праскине куҫ хӗссе йӑл-кулса илет те, Василий Захарча хулӗнчен ҫавӑтса электростанцине кӗрсе каять.

Никандр (*Праские аллинчен тытса*). Мӗнле хавас эп, Праски! Епле килме пӗлтӗн эс кунта?

Праски (*юри вӑрҫтарса*). Сан патна мар-ҫке, атте патне килтӗм,

Никандр (*хавассӑн*). Ах, усалскер! Куратӑп эпӗ, кирек кам патне килнӗ пулсан та, чуну, ав, ман еннех туртӑнать. Ана сан хура

куçусем те пытараймаççӗ. Çитрӗ вӗт ӗмӗтленнӗ кун! Астӑватӑн-и, мӗнле сӑмах панӑччӗ эс мана?

Праски (*ун куçӗнчен пӑхса*). Анчах манмӑн-и эсӗ мана?

Никандр. Мӗн калаçатӑн, тусӑм! Нихçан та, ӗмӗрне те! Ыранах хӑтана яратӑп!

Праски (*шӳт туса*). Ярса пӑх. Атте-аннесем мӗн калӗç. Вӗсенчен иртме пултараймастӑп.

Никандр (*хирӗç шӳт туса*). Вӗсем памасан, эп сана вӑрласа илсе каятӑп.

Праски. Урхамахпа-и, е автомашинӑпа?

Никандр. Çук! Ак çапла йӑтса! (*Праские йӑтса çавӑрать*). Никам та, никам та чарма пултараймасть пире пӗрлешме! Иртсе кайнӑ ун пек вӑхӑтсем!

Çамрӑксем юрласа килсе кӗреççӗ. Пӗри купӑспа. Вӗсен хушшинче Мышкинпа Тамара та пур.

Вӑрман витӗр тухрӑмӑр, тухрӑмӑр,
Вӗрене çулçи çуттипе.
Ял-ял витӗр тухрӑмӑр, тухрӑмӑр—
Ильич лампи çуттипе.

Мышкин (*Никандрпа Праские курса*). Ак ӑçта вӗсем!

Сасӑсем. „Урра" çӗклес вӗсене!

Çамрӑксем хавассӑн шавласа Праскипе Никандра çавӑрса илеççӗ те „урра" çӗклеççӗ.

Мышкин. Çӳлерех!.. Урра-а!..

Никандр. Чимӗр-ха, юлташсем!.. Тӑхтӑрха!.. Мӗн эсир?..

**Праски.** Чаранăр, хĕрсем! Мĕн хăтланатăр?.. Электростанцие эпĕ туман вĕт?!

**Тамара.** Юлташсем! Илтетĕр-и? Пĕлмест-ха вăл—хăйне мĕншĕн „урра“ çĕкленине. (*Праские алă парса*). Орден илнĕ ятпа пĕтĕм чунран ыр сунса саламлатăп сана!

**Праски** (*тĕлĕнсе*). Мĕнле орден?

**Пурте.** Орден панă сана! Вăйлă тырпул туса илнĕшĕн.

**Тамара.** Ленин орденĕ! Халь анчах радиопа пĕлтерчĕç. Никандр, сан аннӳне те медаль панă.

**Никандр.** Тавтапуç, ырă хыпар пĕлтернĕшĕн.

**Мышкин.** Василий Иванч ăçта? Ăна та Ленин орденĕ панă вĕт!

Василий Иванч электростанцинчен тухать.

**Никандр.** Хăй килет.

**Мышкин** (*малалла ыткăнса*). Василий Иванч! Юлташсем, тытăр ăна!.. (*Çамрăксем Василий Иванча „Урра“ çĕклеççĕ. Колхозниксем пуçтарăнаççĕ. Хаваслă юрă янрать. Ташă пуçланать*).

*В Ĕ Ç Ĕ.*

Чувашская
Книжная палата
г. Чебоксары Чувашской АССР

Редактор *С. В. Эльгер,* техн. редактор *Н. Т. Васянка*

НТ 05314 Подписано к печати 4.XII-1948 г. Объем 2,25 п/л
Тираж 5000 экз. Заказ № 2038.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности
при Совете Министров Чувашской АССР

Хакĕ 2 тен.
Цена руб.

АЛЕКСАНДР КАЛГАН

# СОСЕДИ

*Комедия в 4 частях*

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1949